24-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

1941
МАЙ
7
ЫТЛАРИКУН
105 (5820) №

ЧĂВАШ КОММУНИ

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ.

1941 çулти майăн 1-мĕшĕнче мавзолей трибуни çинче. Сылтăмран сулахаялла: Молотов, Ярославский, Сталин, Деканозов, Ворошилов, Шверник, Бадаев, Димитров, Микоян, Каганович, Булганин, Маленков, Андреев, Берия, Щербаков, Вознесенский, Тимошенко, Кузнецов юлташсем. Ф. Кислов фото-ӳкерчĕкĕ (ТАСС).

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

В. М. МОЛОТОВ юлташа СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председательĕ пулма уйăрса лартасси çинчен

Ютçĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарне Вячеслав Михайлович МОЛОТОВ юлташа СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председатель Заместителĕ пулма уйăрса лартас.

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН ПРЕДСЕДАТЕЛĔ М. КАЛИНИН.

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН СЕКРЕТАРĔ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль.
1941 çулти майăн 6-мĕш.

Ачасен çуллахи канăвне тĕплĕн организацилер

Вĕренӳ çулĕн вĕçĕ сывхарса килет. Пирĕн социализмлă тăван çĕршывра çамрăк ăрăва çирĕп сывлăхлă тăвасешĕн партипе совет правительстви çине тăрса ĕçлеççĕ. Шкул ачисене çуллахи каникулсем вăхăтĕнче интереслă тата тулли кану парасси, вĕсен сывлăхне çирĕплетесси — çутĕç органĕсемпе шкулсем умĕнче тăракан паллă задача.

Кашни шкулăн çывăх вăхăтрах ачасен çуллахи канăвне организацилемелли плана хатĕрлесе, педагогика советĕнче пăхса тухса çирĕплетмелле. Ку плана тăвас ĕçе комсомол тата пионер организацисене, вĕренекенсен ашшĕ-амăшĕсен комитечĕсене, вырăнти советсене, колхоз правленийĕсене явăçтармалла.

Ачасен çуллахи кану вăхăтне организацилемелли формăсем пирĕн питех те йышлă: шкулсем çумĕнчи сывлăха çирĕплетмелли площадкăсем, пионер лагерĕсем, ачасен санаторийĕсем, тĕрлĕ экскурсисемпе туристла походсем т. ыт. те.

Шкулсем çумĕнче çулсеренех сывлăха çирĕплетмелли çуллахи площадкăсем организацилеççĕ. Анчах ку ĕçре шкул директорĕсемпе заведующийĕсен иртнĕ çулсенче тивĕçлĕ тимлĕх пулман. Çутĕç Халăх Комиссариачĕн планĕ тăрăх кăçал çуллахи вăхăтра шкул площадкисем пур вăтам шкулсем тата пысăкрах туллимар вăтам шкулсем çумĕнче те пулмалла. Çав площадкăсенче 8 пин ача канмалла. Шкул директорĕсен сывлăха çирĕплетмелли площадкăсем уçма тĕплĕн хатĕрленмелле. Учительсем хушшинчен площадка руководительне халех уйăрса хумалла, учительсемпе аслă классенче вĕренекенсем хушшинчен площадка ĕçленĕ вăхăтра физкультура, юрăпа музыка ĕçне, вăйăсене, техника ĕçне ертсе пыракансене уйăрса хумалла. Площадка ĕçне ачасен ашшĕ-амăшĕсен активне явăçтармалла.

Кăçал çулла шкул ачисем валли 5220 çынлăх пионер лагерĕсем организацилеççĕ. Çутĕç органĕсемпе комсомол комитечĕсен пионер лагерĕсене уçма çывăх вăхăтрах пур енчен те хатĕрленсе çитмелле. Пионер лагерĕсене яма шкулсенчен вĕренӳ отличникĕсемпе ударникĕсене уйăрас пулать.

Ачасемпе çуллахи ĕçсене ирттернĕ чухне вĕсене политикăлла воспитани парасси паллă вырăнта тăмалла. Политикăлла калаçусем, костерсем, литература вулавĕсем, Ленинпа Сталин çинчен, Совет Союзăн геройĕсем çинчен ирттерекен калаçусемпе литература кăçĕсем, историлле вырăнсене кайса экскурсисем тăвасси çуллахи ĕçсен планĕнче хăйсене тивĕçлĕ вырăн йышăнмалла. Ачасене социализм строительствин çитĕнĕвĕсемпе, пирĕн çĕршывăн тулашри политикин çитĕнĕвĕсемпе, социализмла çĕнĕ республикăсемпе паллаштармалла, Хасан геройĕсемпе, Финляндири çапăçусен геройĕсемпе тĕлпулусем ирттермелле.

Шкулсемпе ачасен ытти учрежденийĕсем çуллахи вăхăтра кĕнекене ĕçлессине пĕртте манса хăвармалла мар. Лайăх, интереслă кĕнеке ачасене пĕлӳсем илме хавхалантарать, ачасене культурăллă канма пулăшать. Çавăнпа та тĕрлĕ кĕнекесене коллективлă вулассине анлăн туса ирттермелле. Площадкăсенче, пионер лагерĕсенче çуллахи вăхăтра библиотекăсем, читальнăсем ĕçлемелле тăвас пулать, çĕнĕ кĕнекесен выставкисене тумалла.

Кану вăхăтне ачасемшĕн хаваслă тăвас тесен, вĕсен искусствипе творчествине аталантарса пымалла. Ачасен творчествин олимпиадисем, выставкисем, смотрĕсем çуллахи ĕçсенче пысăк вырăн йышăнса тăни кирлĕ.

Çуллахи вăхăт çамрăк натуралистсемшĕн тĕрлĕ сăнавсемпе ĕçсем тума питĕ майлă. Шкул ачисен «Тăван çĕршыва чечексемпе тата садсемпе илемлетер» лозунгпа пулса иртекен натуралистла походне анлăн сарса ямалла. Пионер отрячĕсемпе шкул ачисене шкул участокĕ çинче йывăçсем, чечексем лартас ĕçе, çимĕç сачĕсем лартас ĕçе явăçтармалла. Колхозсенчи çамрăк выльăхсене шефа илесси кашни çамрăкшăн хисеплĕ ĕç пулса тăмалла.

Ачасен пĕлӳне, кругозорне ӳстерес ĕçре экскурсисемпе туристла походсем паллă вырăн йышăнса тăраççĕ. Çутĕç Халăх Комиссариачĕн планĕ тăрăх кăçал çулла тĕрлĕ экскурсисемпе туристла походсене 16 пин шкул ачи хутшăнмалла. Пирĕн республикăра истори тĕлĕшĕнчен, çутçанталăк тĕлĕшĕнчен паллă вырăнсем сахал мар. Шкулсен çав вырăнсене кайса экскурсисемпе туристла походсем туса ирттермелле. Пирĕн шкулсенче харпăрхăй районне, республикине тĕпчесе вĕренесси кирлĕ вырăнта тăмасть-ха. Çак ĕçе çуллахи вăхăтра тивĕçлипе сарса ярас пулать, уйрăмăнах çамрăк геологсен ĕçне вăйлатса ямалла.

Çуллахи вăхăтпа ачасене ĕçе тата техникăлла творчествăна хăнăхтарас енĕпе усă курса юлмалла. Ĕçлекен чи лайăх модельсем тата вĕренӳ ĕçĕнче усă курмалли приборсем тăвас тĕлĕшпе ирттерекен конкурса шкул ачисене йышлăнрах явăçтарас пулать.

Шкул ачисем хушшинче çуллахи каникулсем вăхăтĕнче çар ĕçĕпе физкультура ĕçне уйрăмăнах паллă вырăна хумалла. Гимнастика, зарядка, тĕрлĕ спорт вăййисем, спартакиадăсем ирттересси кашни шкулăн çуллахи ĕçĕсен планĕнче тивĕçлĕ вырăн йышăнса тăмалла. Ачасене пăшал пеме, шывра ишме, разведка тума, юлануртпа çӳреме, топографи карттисене вулама тата ӳкерме вĕрентес пулать. Хĕллехи вăхăтра ирттернĕ «Штурма», «Разведчиксем» вăййисем çуллахи вăхăтра та ирттермелле. Шкул ачисем БГТО комплексĕн çуллахи нормисене парассине организацилес пулать. Кăна тума шкул площадкисенче, парксенче, стадионсенче физкультура инструкторĕсен дежурствине организацилемелле. Шкул директорĕсен халех физкультура площадкисене тăвас ĕçе тытăнмалла. Ку площадкăсем тата мĕнпур кирлĕ спорт хатĕрĕсем вĕренӳ çулĕ пĕтнĕ çĕре хатĕр пулмалла.

Ачасен çуллахи кану вăхăтне организацилес ĕçре театрсем, кино, парксем, стадионсем, клубсем, музейсем, пионерсен çурчĕсем паллă вырăн йышăнса тăмалла. Халлĕхе республикăри çак учрежденисем ачасемпе çулла ĕçлеме хатĕрленни палăрмасть-ха. Шкул ачисен çуллахи каникулĕсем пуçланичен шутлă кунсем юлчĕç. Çутĕç органĕсен, шкулсен, комсомол организацийĕсен ачасен çуллахи канăвне ирттерме хĕрӳллĕн хатĕрленмелле. Çутĕç органĕсен комсомол организацийĕсемпе тата вырăнти хаçатсен редакцийĕсемпе пĕрле шкулсенче, внешкольнăй учрежденисенче çуллахи ĕçсене хатĕрленесси мĕнле пынине тĕрĕслемелле.

Çуллахи ĕçсен пуçламăшне шкулсенче тĕплĕн паллă тăвас пулать. Шкул праздникĕсем тĕлне вĕренӳ çулĕн итогĕсене палăртакан выставкăсем уçмалла. Ку выставкăсенче чи лайăх вĕренекенсен, учительсен, чи малта пыракан классен çитĕнĕвĕсене кăтартмалла.

Ачасен çуллахи кану вăхăтне организациленĕ чухне кĕркунне пĕлӳ тĕрĕслевĕсем тытмалли ачасемпе ĕçлессине те манса хăварас пулмасть. Вĕсене шкулăн кирлĕ пулăшăва парса тăмалла, консультацисем памалла, заданисем парса ĕçлеттермелле, вăхăтран вăхăта вĕсем килте мĕнле ĕçленине тĕрĕслесе тăмалла.

Çутĕç органĕсен учительсене отпускăсем панă чухне çуллахи ĕçсене шута илмелле.

Пирĕн çĕршывра ачасемшĕн тăрăшасси питех те паллă вырăнта тăрать. Çутĕç органĕсен, комсомол организацийĕсен ачасен çуллахи канăвне пур енчен те тĕплĕн организацилесе, ачасен сывлăхĕшĕн сталинла тăрăшнине кăтартмалла.

СССР Верховный Совет Президиумĕн УКАЗĔ

В. М. МОЛОТОВ юлташа СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председателĕн ĕçĕсенчен хăтарасси çинчен

В. М. Молотов юлташ Ютçĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕн обязанноçĕсене туса пынипе пĕр вăхăтрах СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председателĕн обязанноçĕсене туса пыма йывăрри çинчен пĕрре кăна мар пĕлтернĕ пирки, В. М. Молотов юлташ хăйне СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председателĕн обязанноçĕсенчен хăтарма ыйтнине пурнăçа кĕртес.

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН ПРЕДСЕДАТЕЛĔ М. КАЛИНИН.
СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН СЕКРЕТАРĔ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль. 1941 çулти майăн 6-мĕш.

СССР Верховный Совет Президиумĕн УКАЗĔ

И. В. СТАЛИН юлташа СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председателĕ пулма уйăрса лартасси çинчен

Иосиф Виссарионович СТАЛИН юлташа СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председателĕ пулма уйăрса лартас.

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН ПРЕДСЕДАТЕЛĔ М. КАЛИНИН.
СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН СЕКРЕТАРĔ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль. 1941 çулти майăн 6-мĕш.

Çар академийĕсенчен командирсене вĕрентсе кăларнă ятпа Кремльри Пысăк Дворецра пулнă чаплă пуху

Хĕрлĕ Çаран 16 академийĕнчен тата граждăнла аслă шкулсенчи çар факультечĕсенчен 9 факультетран командирсене вĕрентсе кăларнă ятпа майăн 5-мĕшĕнче Кремльри Пысăк Дворецăн ларусем пулакан валĕнче чаплă пуху пулса иртнĕ.

Каçхине 6 сехетре ларусен залне çар академийĕсен выпускникĕсем, профессорĕсемпе преподавателĕсем, высший военнăй командованипе тинĕс-çар командованийĕн представителĕсем пырса кĕреççĕ.

Пухăннисем хушшинче: Совет Союзĕн Маршалĕсем — Буденный, Кулик, арми генералĕсем — Жуков, Мерецков тата Тюленев, адмиралсем — Исаков тата Галлер, Шкирятов, Димитров, Мехлис, Вышинский, Булганин, Землячка, Первухин, Малышев, Косыгин, Вахрушев, Шахурин, Бадаев, Ярославский, Поспелов, Митин, Тевосян, Ванников, Седин, Ефремов, Деканозов, Лозовский, Горкин, Николаева, Пронин, Попов, Черноусов, Хохлов, Манулильский, Кафтанов юлташсем, Социализмлă Ĕç Геройĕсем — Микулин, Поликарпов, Шпитальный, Яковлев юлташсем, Совет Союзĕн Геройĕсем — Душкин, Парсегов, Молоков, Байдуков, Бочкарев, Юмашев, Кашуба, Арман, Михайлов, Левченко, Кренкель, Ширшов, Алексеев юлташсем т. ыт. те.

Сталин, Молотов, Ворошилов, Калинин, Каганович, Андреев, Микоян, Ждановв, Шверник, Вознесенский, Щербаков, Маленков, Тимошенко, Кузнецов юлташсем президиума пырса кĕрсен, вĕсене нумайччен тăвăллăн ováци туса кĕтсе илеççĕ. Зала пухăннă çынсем Сталин юлташа тата унăн соратникĕсене ура çине тăрса саламлаççĕ. Ováци темиçе минута хушши кĕрлесе тăрать.

Председатель пулса ертсе пыракан Оборона Халăх Комиссарĕ Совет Союзĕн Геройĕ тата Маршалĕ Тимошенко юлташ Хĕрлĕ Çаран военнс-учебнăй заведенийĕсен управленийĕн начальникне генерал-лейтенанта Смирнов юлташа доклад тума сăмах парать. Хăйĕн докладĕнче Смирнов юлташ Хĕрлĕ Çаран Çар академийĕсен тата граждăнла аслă шкулсенчи çар факультечĕсен юлашки çул хушшинчи ĕçĕсен итогĕсене тунă.

Çакăн хыççăн СССР Верховный Совечĕн ячĕпе саламлама Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ Калинин юлташ сăмах илĕт. Калинин юлташа нумайччен вăйлă ováци туса кĕтсе илеççĕ. Калинин юлташ çакна шанса тăни çинчен калать: çар академийĕсенчен вĕренсе тухнă командирсем, çарсене тавăрăнса, хăйсем вĕреннĕ вăхăтра мĕн лайăхи илнĕ — çавсене пĕтĕмĕшпех çарсене илсе пырĕç, тивĕçлĕ войскăсен командирĕсемшĕн кирлĕ опыта хăвăрт вĕренсе алла илĕç.

Калинин юлташ хăйĕн сăмахне вĕçленĕ чухне зала пухăннисем пурте тăнăллăн алă çупаççĕ.

«Хĕрлĕ Çаршăн — урра!»

«Ленин—Сталин партийĕшĕн—урра!»

«Аслă Сталиншăн — урра!»

Залра «урра» кăшкăрни, «Сывă пултăр пирĕн çулпуç тата руководитель аслă Сталин» тесе кăшкăрни нумайччен кĕрлесе тăрать.

Большевиксен Пĕтĕм Союзри Коммунистла партийĕн Центральный Комитечĕн тата Совет Правительстви ячĕпе саламлама Тимошенко юлташ Сталин юлташа сăмах парать.

Зала пухăннисем пурте хăйсен вырăнĕсем çинчен çĕкленсе тăраççĕ тата Сталин юлташа чысласа, хаваслă ováци тăваççĕ. «Социализм çĕршывĕн хĕçпăшаллă вăйăсен организаторĕшĕн аслă Сталиншăн — «урра!» тесе кăшкăрнисем нумайччен янăра-янăра илтĕнеççĕ. Хăйĕн выступленийĕнче Сталин юлташ Хĕрлĕ Çарта юлашки çулсем хушшинче пулса иртнĕ пысăк улшăнусене палларăмăр. Çакна кăтартса панă: кучухнехи вăрçă онычĕ тăрăх Хĕрлĕ Çар организацине çĕнĕлле йĕркеленĕ тата нумай енчен çĕнĕрен хĕçпăшалланчĕ.

Сталин юлташ çар академийĕсенчен вĕренсе тухнă командирсене саламланă тата вĕсене ĕçре çитĕнӳ тума сĕнĕ.

Сталин юлташ сăмахĕ хĕрĕх минутăна яхăн пынă, ăна питех те пысăк тимлĕхпе итленĕ.

Сăмах каласа пĕтернĕ хыççăн Сталин юлташа чысласа татах тепĕр хут калама çук пысăк çĕкленӳпе патех те вăйлă ováци тунă. (ТАСС).

Çар академийĕсенчен вĕренсе тухнă командирсене Кремльре йышăнни

Майăн 5-мĕшĕнче каçхине, Кремльри Пысăк дворецра, ВКП(б) Центральный Комитечĕпе СССР Правительстви çар академийĕсенчен вĕренсе тухнă командирсем валли йышăну тунă. Каçхине 7 сехет тĕлне хăнасем Георгиевски зала, Грановитăй палатăна, Владимирский, Пĕчĕк тата Çĕнĕ залсене пырса тулнă. Çар академийĕсенчен вĕренсе тухнисемсĕр пуçне, кунта ВКП(б) Центральный Комитечĕн членĕсем, Халăх Комиссарĕсем, Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар Флочĕн высший командованийĕ, Совет Союзĕн Геройĕсем, Социализмлă Ĕç Геройĕсем, военнăй учебнăй заведенисен начальникĕсем, профессорĕсемпе преподавателĕсем пур.

Сталин, Молотов, Ворошилов, Калинин, Каганович, Андреев, Микоян, Ждановв, Шверник, Вознесенский, Щербаков, Маленков, Тимошенко, Кузнецов юлташсем Георгиевски зала пырса кĕрсен, вĕсене пухăннă çынсем калама çук пысăк çĕкленӳпе хавхаланса кĕтсе илнĕ.

Пухăннă çынсем умĕнче Оборона Халăх Комиссарĕ Совет Союзăн Геройĕ тата Маршалĕ С. К. Тимошенко юлташ кĕске сăмах калать, Хĕрлĕ Çаран çар академийĕсенчен вĕренсе тухнисене пĕтĕм чĕререн саламлать.

Вĕренсе тухнисен ячĕпе çаксем саламлă сăмахсем тухса каланă: Хĕрлĕ Çаран М. В. Фрунзе ячĕпе тăракан Академийĕнчен майор Козырь, Хĕрлĕ Çар механизацийĕпе моторизацийĕн И. В. Сталин ячĕпе тăракан Академийĕнчен—Совет Союзĕн Геройĕ полковник Михайлов, Ф. Э. Дзержинский ячĕпе тăракан Артиллери Академийĕнчен — капитан Антоненко, Хĕрлĕ Çаран сывлăш-çар вăйăсен командний тата штурмански составĕн Академийĕнчен — капитан Кудряшов, К. Е. Ворошилов ячĕпе тăракан химически защита Академийĕнчен — капитан Поляков.

Сталин юлташ çар академийĕсен мĕнпур руководителĕсемпе преподавателĕсен составне чысласа тост çĕклет тата çар академийĕсенчен вĕренсе тухнисем чăссене çĕнĕ техникăна тарăнăн пĕлнине хĕçпăшалланса тавăрăнассине шанса тăни çинчен калать.

Малалла Сталин юлташ Хĕрлĕ Çаран уйрăм йышши войскисем мĕнле вырăн йышăнса тăни çинчен калать тата артиллеристсене, танкистсене, летчиксене, кавалеристсене, пехотинецсене, инженерсене, техниксене, саперсене, связистсене, самокатчиксене, парашютистсене, минометчиксене чысласа — мĕнпур йышши хĕçпăшалăн представителĕсене чысласа тост çĕклет.

«Урра» кăшкăрни Дворец тăрăх аслати пек кĕрлесе каять.

Тимошенко юлташ хăйĕн саламлă сăмахне çар академийĕсен начальникĕсене асăнса калать. Вăл академисен ĕçне Хĕрлĕ Çаран ӳснĕ требованийĕсен виçине çитиччен хăпартма чĕнет.

Унтан вăл çар академийĕсенчен вĕренсе тухнисене пурне те татах тепĕр хут ăшшăн саламлать тата вĕсене командирсем умĕнче чăссенчи практикăллă ĕçре тăракан ответлă задачăсем çинчен аса илтерет.

— Сирĕн задача, — тет Тимошенко юлташ, — пирĕн Хĕрлĕ Çаран хăватне ывăнма пĕлмесĕр, кунсерен, сехетсерен çирĕплетсе пырасси, хамăртан пирĕн парти, Совет правительстви мĕн ыйтнине пĕтĕмпех, пирĕн командирсене кирлĕ пек, тивĕçлĕн тата чысланă пурнăçа кĕртсе пырасси пулса тăрать.

Йышăну темиçе сехете пынă. Хăнасем валли пысăк концерт панă. (ТАСС).

Республика уйхирĕсенче

ÇĔРПУ, майăн 6-мĕш. **(Хамăр корр., телефон тăрăх).** Çĕр типсе çитме тытăннă май, районри 14 колхозра уйхир ĕçĕсем пуçланнă. Паваркассинчи «Красная Повария» колхозра, вырăнăн-вырăнăн суйласа илсе, 20 гектар, Чурачăк ялсоветĕнчи «Броневик» колхозра 20 гектар çурхи суха тунă. «Родина» колхозра 12 гектар кĕрхи калчасене сӳреленĕ.

Чылай колхозсенче кĕрхи тырăсене кайăк-кĕшĕк тислĕкĕпе тата минерал удобренисемпе апат пама тытăнчĕç. Районĕпе пурĕ 283 гектар çинче калчасене апат панă.

Т. МАЙОРОВ.

ЕЛЧĔК, майăн 6-мĕш. **(Телефон тăрăх).** Районри 39 колхоз çуракине тухрĕç. Ытти 7 колхозĕ паян е ыран тухаççĕ. Паянхи куна пĕтĕмпе тĕрлĕ культурăсем 770 гектар акнă.

«Красный партизан» колхозра сӳремесĕр акма тытăннă пулнă. Малтанхи кунах 3 гектар акса хăварнă. Çак çитменлĕхе вăхăтра палăртса, ăна çийĕнчех пĕтернĕ.

Малтанхи кун

ЭЛĔК, майăн 6-мĕш. **(Хамăр корр., телефонпа).** Майăн 4-мĕшĕнче каçхине контрольнăй пост членĕсем колхоз правленин канцелярине пырса иккĕмĕш пусăра уйрăм вырăнсене суйласа илсе çурхи суха тума май пурри çинчен пĕлтерчĕç. Колхоз председателĕ Нилов юлташ ун çинчен çав кунах бригадирсене каларĕ, тепĕр кун ирхине сухана тухма хушрĕ. Бригадирсем суха тăвакансене пĕлтерсе тухрĕç.

Ирхине бригадир Иванов тата колхоз председателĕ Нилов юлташсем суха тăвакансемпе пĕрле иккĕмĕш пусăна тухрĕç. Вĕсем çĕр типсе çитнине тĕрĕслерĕç. Сухаçсем ĕçе тытăнчĕç. Вĕсем ултăн. Кашни икшер лашапа, икшер касăллă плугсем кӳлнĕ. Малта Иван Яковлев, ун хыççăн Андрей Прокопьев т. ыт. те.

«Сутталла» колхозăн акана 3 кунта вĕçлемелле. Кашни плуг пуçне кашни кун гектар çурă сухаламалла. Çаксем çинчен сухалакансене ăнлантарса паман. Вĕсем хăйсен ĕç нормисем çинчен пĕлмеççĕ.

— Эсир хăш колхозпа ăмăртатăр? — тесе ыйтрăмăр эпир вĕсенчен.

—Хăш колхозпа ăмăртатпăр-ха эпир? — ыйтрĕç вĕсем пĕр-пĕринчен.

Малтанхи кун Урмайри «Сутталла» колхозра ĕç нормисем çинчен пĕлменнине тата социализмла ăмăртăва организацилеменнине кăтартса панă.

И. МОСЕЕВ.

Черевичный самолечĕ хĕвеланăç еннелле вĕçсе çĕкленнĕ

ВРАНГЕЛЬ УТРАВĔ, майăн 5-мĕш (ТАСС). Паян «СССР Н-169» самолетĕ вĕçсе çĕкленме йăлтах хатĕрлесе çитернĕ.

Экспедици 15 кун хушшинче пăчинчи виçĕ лагерьте туса ирттернĕ научнăй сăнавсене çырса хунă материалсене часах Мускава илсе çитереççĕ.

Çурçĕр тинĕс çулĕн Главнăй Управленийĕ самолет экипажне Мускава килнĕ чух çул çинче Арктикăри тинĕс çулĕпе çуммăн вырнаçса тăракарайонсенчи пăрсене тĕплĕн сăнас тухма тата уйрăмăн илсен Котельнăй утравĕ патĕнчи пăрсем мĕнлине палăртма задани панă.

Мускав вăхăчĕпе 19 сехет те 50 минутăра самолет Врангель утравĕ çинчи аэродром çинчен вĕçсе çĕкленет. Черевичный хĕвеланăç еннелле çул тытатать. Тăватă моторлă сывлăш карапĕ Хĕвеланăç Çĕнĕр тинĕсĕн пăрсем урлă Котельнăй утравĕ патнелле вĕçсе пырать.

ХРОНИКА

Колхозниксем, строительствăри рабочисем, инженерно-технически работниксем — Узбекистанри Пысăк трактăн строителĕсем, çавăн пекех тата Сурхан-Дарья, Бухара, Самарканд тата Ташкент облаçĕсенчи обществăлла организацисем ыйтнипе СССР Верховный Совечĕн Президиумĕ Узбекистанри Пысăк тракта В. И. ЛЕНИН ятпа панă.

(ТАСС).

Таджик искусстви декадин участникĕсене Сталинабадра кĕтсе илни

СТАЛИНАБАД, майăн 4-мĕш. (ТАСС). Таджик искусстви декадин участникĕсем паян Сталинабада тавăрăннă. Поезд пырса çитнĕ вăхăт тĕлне вокзал перронĕ çине 4 пин çын ытла пухăннă. Унта пулса иртнĕ митингра Таджикистанри Коммунистсен (большевиксен) Партийĕн Центральный Комитечĕн секретарĕ Исаев тата партин Сталинабад горкомĕн секретарĕ Волчков юлташсем саламлă сăмахсем тухса каланă. Саламсем çине ответлесе, СССР халăх артисчĕ Касымов сăмах каланă.

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

Наркомпросри парторганизацинче

Чăваш АССР Наркомпросĕнчи пуçламĕш парторганизаци отчетлă тапхăрта ĕç кунĕпе туллин усă курас, штата пĕчĕклетес, управленисемпе отделсенче юлса пыракан участоксене лайăхлатас тĕлĕшпе чылай ĕçсем туса ирттернĕ, политикăллă-массăллă ĕç те самаях лайăхланнă. Чылай коммунистсем хăйсен авангардлă рольне кăтартса ĕçлеççĕ, вĕсем ĕçри ситменлĕхсене вăхăтра палăртаççĕ, çав ситменлĕхсене пĕтерме администрацине пулăшаççĕ.

Пуçламĕш парторганизацин секретарĕ Никитина юлташ хăйĕн отчетлă докладĕнче çакна палăртрĕ: 19 членпа 11 кандидатран «ВКП(б) историйĕн кĕске курсĕ» учебника 15 член тата 5 кандидат вĕренсе тухнă. Пренире тухса каланă юлташсем юлашки пилĕк уйăх хушшинче пуçламĕш парторганизаци коммунистсем хăйсен политикăллă пĕлӳĕхне мĕнле ӳстерсе пынине ситĕлĕкĕр контроль туса пынине паллă турĕç.

Партбюро Наркомпрос аппаратĕнче ĕçлекен коммунистсем хушшинче ытларах ĕçленĕ, ытти учрежденисенче, сăмахран, музейра, ăслăлăхпа тĕрлев институтĕнче, лекци бюровĕнче, центральнăй библиотекăра ĕçлекен коммунистсемпе сахал ĕçленĕ. Ахальтен мар ĕнтĕ докладчик çакăнта асăннă учрежденисенчи коммунистсен ĕçĕсем çинчен пачах каламарĕ. Партбюро ситĕлĕкĕр ĕçленине пула уйрăм коммунистсем хăйсене шанса панă ĕçсене кирлĕ пек туса пырайман. Атăл лешьенчи ачасен çурчĕн директорĕ пулнă. Павлов ачасен çурчĕн хуçалăхне юхăнтарса янă, воспитани ĕçне начар туса пынă. Парторганизаци Павлова судпа айăпланă хыççăн тин ун çинчен сӳтсеявса, ăна парти ретĕнчен кăларнă.

Семенов коммунист аппаратра волокитăна халичченех пĕтерменни çинчен кăтартса пачĕ. Культура çурчĕсен директорĕсен мартăн 19-мĕшĕнче пулса иртнĕ канашлун резолюцине апрелĕн 29-мĕшĕ ситсен кăна çырса хатĕрленĕ. Çак вăхăт тĕлне резолюцири чылай пунктсене пурнăçламалли сроксем иртсе кайнă. Çавăн пекех школьнăй управленипе наркомат руководстви СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ 1940 çулти октябрĕн 11-мĕшĕнче халиччен шкулсен аллинче тăнă çуртсене шкулсене каялла тавăрса парасси çинчен йышăннă постановленине пурнăçа кĕртсе пырас тĕлĕшпе начар ĕçленине палăртрĕ. Шупашкар хулинче кăна тăватă шкул çурчĕ ытти учрежденисен аллинче тăрать.

Наркомпрос хутла пĕлменнисемпе начар пĕлекенсене вĕрентес ĕçе конкретлăн ертсе пыман. Ситĕннисен шкулĕсен управленинче Сапожников юлташ 4 уйăх хушши инспектор пулса ĕçлет / пулсан та, вырăнта пĕрре те пулман. Наркомат руководстви Сапожников юлташ хушнă ĕçе пурнăçа кĕртеймесрен хăраса районсене ямасăр тăратать.

Пренире 14 çын тухса каларĕ. Вĕсем Сутăç Халăх Комиссариачĕн тата пуçламĕш парторганизацин ĕçĕсене лайăхлатма кирли çинчен çирĕппĕн кăтартса пачĕç.

Р. СМИРНОВ.

Артельсенчи политикăллă-массăллă ĕç

Перерыв вăхăтĕнче белошвейнăй цеха артельти культработник Муров юлташ пычĕ. Унăн аллинче «Правда», «Красная Чувашия», «Чăваш Коммуни» хаçатсем, тĕрлĕрен журналсем.

— Акă сире паян килнĕ çĕнĕ хаçат-журналсем,—терĕ вăл работницăсене.

— Мана «Общественница» журнал пар!

— Мана «Правда»!—илтĕнчĕç сасăсем.

Хаçат-журналсем пурне те çитмерĕç. Икшерĕн е виçшерĕн пухăнса, вĕсем çĕнĕ хаçатсене вулама пуçларĕç.

Работницăсем хаçатсене пăхса тухнă хыççăн культработник сăмах илет. Ăна пурте итлеççĕ. Вăл вĕсене хаçатра пичетленнĕ çĕнĕ материалсене вуласа ăнлантарса пама пуçлать. 10—15 минута хушшинче культработник Балканри, Африкăри вăрçăсем çинчен, социализмлă тăван çĕршывра май уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăрту сарăлса пыни çинчен каласа парать. Ăнланманнисене çĕнĕрен каласа ăнлантарать.

Ленточнăй, портновски, пукансем тăвакан цехсенче те çак вăхăтра калаçусем иртеççĕ. Вĕсене артельти культсовет членĕсем, комсомолецсем ирттереççĕ. Рабочисем вăл калаçусене активлăн хутшăнаççĕ.

Çапла иртет кăнтăрлахи перерыв вăхăчĕ Ширшов ячĕпе тăракан артельте. Ĕç пĕтнĕ хыççăн каллех кĕске вăхăтлă калаçусем пулса иртеççĕ.

Ширшов ячĕпе тăракан артельте политикăллă-массăллă ĕçе лайăх организациленĕ. Культсовет членĕсем кашни кунах пур цехсенче те тĕрлĕ ыйтусем тăрăх калаçусем туса ирттереççĕ, хаçат-журнал вуласа парааççĕ.

Артельте ПВХО, ВС кружокĕсем организациленĕ. Занятисем яланах йĕркеллĕ иртеççĕ. Техминимум кружокĕнче 34 çын вĕренет. Çак кунсенчех тата ГТО комплексĕн гимнастика нормине 15 çын пачĕç.

Рабочисем хушшинче политикăллă-массăллă ĕçе туса пыни ĕç тухăçлăхне ӳстерме, плана пур енĕпе те ăнăçлăн тултарма пулăшать. А. Колышков, Курасова, Еремин, Соловьева, Донцова юлташсем хăйсен нормисене кулленех ытлашши тултараççĕ. Вĕсен ĕç опычĕсем çинчен рабочисене пухусенче, канашлусенче каласа кăтартаççĕ, стена хаçачĕ урлă çутатаççĕ.

Кашни цех, смена, рабочи пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлеççĕ. Коллектив иртнĕ çулти плана 176 процент, кăçалхи 1-мĕш квартал планне 128,7 процент тултарнă. Ăмăрту юлашки вăхăтра татах ăнлăн сарăлса кайнă. Ку вăл марг уйăхĕнчи тĕслĕхсенчен те лайăх курăнать: трикотажнăй цех март уйăх планне 237,5 процент, ленточнăй—193,2 процент, белошвейнăй 160,8 процент, пĕтĕм артелĕпе 150,3 процент тултарнă.

«Красный Октябрь» артельте пачах урăхла. Кунта рабочисем хушшинче массăллă-ăнлантарууллă ĕçе киолĕ пек йĕркелемен. Канмалли вăхăтсенче рабочисене хаçат-журнал вуласа ăнлантарассине, калаçусем ирттерессине организацилемен. Пухусем те сайра-хутра çеç пулаççĕ.

Артель председателĕ Ильин юлташ каланă тăрăх, артельте 14 стахановец. Анчах вĕсем çинчен те рабочисем пĕлмеççĕ. Тĕрлĕ кружоксен, организацисен ĕçĕсем çинчен калама та кирлĕ мар, мĕншĕн тесен вĕсене нихăçан та организацилемен. Пур библиотека та яланах хупă тăрать. Çавна пула ĕнтĕ артель хăйĕн планне уйăхран уйăх тултараймасть: кăçалхи 1-мĕш квартал планне те 79,9 процент кăна тултарнă.

Производствăллă программăна ăнăçлăн тултарса пыма рабочисем хушшинче политикăллă-массăллă ĕçе анлăн сарса пыни нумай пулăшать. Анчах «Красный Октябрь» артель руководителĕсем çакна ăнланмаççĕ: плана мĕншĕн тултарса пыманни çинчен калаçма пуçласанах, тĕрлĕ сăлтавсем тупма хăтланаççĕ.

Хар. ЛИСИН.

Çĕмĕрле. (Хамăр корр.).

Райсовет исполкомĕнчи парторганизацин ĕçĕсем

Партин XVIII съезчĕ хыççăн Краснармейски райсовет исполкомĕнчи пуçламĕш парторганизаци хăйĕн ĕçне çĕнетсе урăхлатас тĕлĕшпе чылай ĕçсем турĕ. Совет аппаратне пĕчĕклетсе йӳнетес, аппаратăн культурине хăпартас, бюрократизма пĕтерес, ĕç дисциплинине çирĕплетес тĕлĕшпе нумай ĕçсем тунă.

Парторганизаци план тăрăх ĕçлесе пынă, пухусене вăхăтра ирттернĕ. Коммунистсен активлăхĕ, культурăлăхĕ, политикăллă пĕлĕвĕ тата дисциплини ӳснĕ. Коммунистсем пурте ВКП(б) историне вĕренеççĕ. Александровпа Игнатьев юлташсем парти историне Ленин тата Сталин произведенийĕсем тăрăх вĕренеççĕ. Парторганизаци секретарĕ Дмитриева юлташ парти историне вĕренекен коммунистсемпе 4 хутчен юлташла калаçу туса ирттернĕ, вĕсене ĕçре пулăшнă.

Çапла, çынсем тăрăшса вĕренсе, ӳсе пынă, çавна май вĕсем кулленхи ĕçе те лайăх туса пынă. ВКП(б) членĕ Игнатьев юлташ райфо заведующийĕ пулса ĕçлет. Вăл хăйĕн ĕçне лайăх туса пырать. Район финплана квартал-тан квартала тултарса пынă. Парти членĕн кандидачĕ Яковлев юлташ та юлашки вăхăтра исполком ĕçĕллĕр пайĕнче лайăх ĕçлеме пуçларĕ. 1940 çулта çулĕр тăвас, кĕпер юсас, çĕнĕрен кĕперсем тăвас плана тултарнă.

Йышăннă решенисем мĕнле пурнăçланнине тĕрĕслесе пынă, ун çинчен тепĕр пухура каласа панă. Коммунистсене партиллĕ порученисем панă, вĕсене мĕнле пурнăçланнине тĕрĕслесе пынă.

Отчетлă доклад тăрăх 10 коммунист тухса каларĕç. Тухса каланă юлташсем парторганизаци ĕçĕнчи ситменлĕхсене большевикла критиклерĕç. Парторганизаци комсомол организацине ситĕлĕкĕр ертсе пынă. Уйрăм комсомолецсем ВЛКСМ Уставне пăснисем пулнă. Райсовет исполкомĕнче ĕççыннисен жалобисене тата сыпăвĕсене пăхса тухса татса парас ĕçре ситменлĕхсем сахал мар пулнă, анчах та пуçламĕш парторганизаци çак ĕçпе сахал интересленнĕ.

Л. КОНСТАНТИНОВ.

ВКП(б) райкомĕсен кадрсем енĕпе ĕçлекен секретарĕсен канашлăвĕ

Майăн 4-мĕшĕнче Шупашкарта ВКП(б) райкомĕсен кадрсем енĕпе ĕçлекен секретарĕсен канашлăвĕ пулса иртрĕ. Канашлура ВКП(б) Улатăр райкомĕн кадрсем енĕпе ĕçлекен секретарĕ Серяев юлташ тата ВКП(б) Шупашкар горкомĕн кадрсем енĕпе ĕçлекен секретарĕ Федоров юлташ промышленность тата транспорт кадрĕсемпе мĕнле ĕçлени çинчен докладсем туса пачĕç. Вĕсен доклачĕсем тăрăх пренире ВКП(б) Чăваш Обкомĕн промышленноçпа транспорт енĕпе ĕçлекен секретарĕ Крылов, ВКП(б) Обкомĕн кадрсем енĕпе ĕçлекен секретарĕ Матвеев юлташсем тухса каларĕç. Пренире пурĕ 7 çын тухса каларĕ.

Докладчиксем тата пренире тухса каланă юлташсем, ВКП(б) Пĕтĕм Союзри XVIII конференци решенийĕсене пурнăçа кĕртсе пырса, парти организацийĕсем промышленность предприятисене ертсе пырассине, промышленность кадрĕсем хушшинче ĕçлессине лайăхлатас тĕлĕшпе чылай ĕçсем тунине палăртрĕç. Ку вăл промышленноçпа транспорт предприятийĕсем 1941 çулти пĕрремĕш квартал планне тултарас ĕçре тунă чылай пысăк ситĕнӳсенчен те лайăх курăнать. Государство промышленноçĕ 1941 çулти пĕрремĕш квартална, иртнĕ çулти пĕрремĕш квартална танлаштарсан, продукци 19,2 процент ытларах туса кăларнă. Районри промышленность 1941 çулти пĕрремĕш квартал планне 107,3 процент тултарнă. Иртнĕ çулта питĕ начар ĕçленĕ предприятисем: Етĕрнери, Сĕнтĕрвăрринчи спирт завочĕсем, Шупашкарти эрех завочĕ, Вăрнарти фосфорит завочĕ кăçал производствăллă программăна тултарса ĕçлеме пуçларĕç.

ВКП(б) Шупашкар горкомĕ, Улатăр, Сĕнтĕрвăрри, Етĕрне, Канаш райкомĕсем промышленность предприятисем тата вĕсен руководителĕсен ĕçĕсене тĕплĕн сăнаса вĕренме тытăннă. Чылай предприятисенче стахановла шкулсем организациленĕ, кадрсене экономикăллă пĕлӳ парас тĕлĕшпе ĕçлеме тытăннă. Çапла, Сĕнтĕрвăрри райкомĕ промышленность, транспорт тата хуçалăх организацисене ертсе пыракан кадрсем валли организациленĕ семинарăн кашни занятинех 60—70 çын çӳрет. ВКП(б) Канаш райкомĕ вагонсем юсакан заводри мастерсен производствăри рольне çĕклес тĕлĕшпе чылай ĕçсем туса ирттернĕ.

Анчах та промышленноçпа транспорт предприятисене ертсе пырас, кадрсемпе ĕçлес ĕçре ситменлĕхсем те сахал мар. ВКП(б) райкомĕсен кадрсен отделĕсем хăйсен ĕçĕсене лигтĕ вăрахăн урăхлатса çĕнетеççĕ. ВКП(б) Иĕпреç, Ишлей, Советски райкомĕсем хуçалăхăн ертсе пыракан кадрĕсене тивĕçлипе сăнаса вĕренмеççĕ, вĕсен кулленхи ĕçре сахал пулăшаççĕ, пултарулла кадрсене ертсе пырас ĕçе хăюллăн куçарса пыни çук. ВКП(б) Ишлей райкомĕн кадрсем енĕпе ĕçлекен секретарĕ Константинов, ВКП(б) Советски райкомĕн секретарĕ Архипов юлташсен ĕçĕнчи ситменлĕхсене Матвеев юлташ хытă критиклерĕ, парти райкомĕсен кадрсен отделĕсем умĕнче тăракан малашнехи задачăсене палăртса пачĕ.

Канашлура промысла артелĕсемпе коопераци кадрĕсене çирĕплетес ыйту çивĕччĕн тăчĕ. ВКП(б) Обкомĕн секретарĕ И. Чарыков юлташ хăйĕн сăмахĕнче нумай фактсемпе примерсем тăрăх, халăх хуçалăхĕн çак участокĕсенче кадрсене суйласа ĕçе лартас, вĕсене воспитани парас ĕçре пысăк ситменлĕхсем пуррине кăтартрĕ, малашнехи задачăсене палăртса хăварчĕ.

— Хуçалăхăн çак участокĕсене ертсе пыма кадрсем суйласа илесси çине уйрăмăнах тимлĕн çăвăрăнса пăхас пулать, — тет Чарыков юлташ.

Канашлу кадрсене суйласа илессине лайăхлатмалли тата вĕсене воспитани памалли конкретлă мероприятисене палăртса хăварчĕ.

Майăн 1-мĕшне Мускавра уявланă. Войскăсен Хĕрлĕ площадьри парачĕ.
УКЕРЧЕК ÇИНЧЕ: механизациленĕ артиллери парадра. В. Малышев фото-ӳкерчĕкĕ. (ТАСС).

Отчетпа суйлав пухăвĕсен хăшпĕр итогĕсем

Апрелĕн 10-мĕшпе майăн 1-мĕш хушшинче Çĕмĕрле районĕнче пурĕ 23 пуçламĕш парторганизацинче отчетпа суйлав пухăвĕсем пулса иртрĕç. Пухусем критикăпа самокритикăна анлăн сарса янипе, пысăк активлăхпа иртрĕç. Ку ĕнтĕ парторганизацисен ĕçĕнчи ситменлĕхсене тĕплĕн уçса палăртма, малашне вăл ситменлĕхсене пĕтерме пулăшать.

Ку тариччен пулса иртнĕ пухусене учетра тăракан коммунистсем 98,6 процент пынă, вĕсенчен çуррине яхăн тухса каланă. Вĕсем пурте парторганизаци ĕçне лайăхлатас тĕлĕшпе паха сĕнӳсем панă.

Турханти «Комбинат» колхоз çумĕнчи пуçламĕш парторганизаци пĕтĕмпе 8 коммуниста пĕрлештерсе тăрать. Пухăва пурте пынă, вĕсенчен парторганизаци отчечĕ тăрăх 7 коммунист тухса каланă. Кашни вĕсем парторганизацин лайăх ĕçĕсем çинчен каланипе пĕрлех, унăн çитменлĕхĕсене те кăтартнă. Акă хăшпĕр тĕслĕхсем: «Комбинат» колхоз тырпул тухăçлăхне çулсерен ӳстерсе пырать. Иртнĕ çулта вăл вăтамран гектар пуçне 18 центнер тĕштырă туса илчĕ. Уйрăм участоксем çинчен татах та ытларах тырă туса илнĕ. Сăмахран, сĕлĕ 22,8 центнер илнĕ т. ыт. те.

Ку колхозри коммунистсем чăн-чăнах колхоз производствинче малта пыраççĕ, пример кăтартаççĕ. Кунта политикăлла-массăллă ĕçе те лайăх организациленĕ. Агитколлективра 17 çын, вĕсенчен чылайăшĕсем коммунистсемпе комсомолецсем.

Анчах парторганизаци ĕçĕнче ситменлĕхсем те пулнă. Тухса калакансем уйрăмăнах хăшпĕр бригадăсенче тырпул тухăçлăхне хăпартассишĕн, выльăх-тĕрлĕх йышне ӳстересситĕн яхăн кĕрешнине тата çамрăк коммунистсем хушшинче çителĕксĕр ĕçленине палăртрĕç.

Пуху парторганизаци ĕçне вăтам тесе йышăнчĕ, унăн секретарьне малтан ĕçленĕ Костяков юлташах суйларĕç.

Пачах урăхла Мăн Улхапри пуçламĕш парторганизацин ĕçĕ. Парторганизаци секретарĕ Сычев юлташ ĕçе тивĕçлипе йĕркелесе пыма пултарайман, политикăллă-массăллă ĕçе начар организациленĕ. Çавна пула кунта уйрăм коммунистсем парти тата государство дисциплинине пăснă. ВКП(б) историне пур коммунистсем те мар тăрăшса вĕренеççĕ. Акă парти кандидачĕсем Оборинпа Столбов юлташсем парти историне вĕренмеççĕ т. ыт. те. Колхоз тырпул тухăçлăхне ӳстерес тĕлĕшпе хăшпĕр ĕçсем тунă, анчах ситĕлĕкĕр, уйрăмăнах выльăх-чĕрлĕх продуктивлăхне ӳстерес тĕлĕшпе япăх ĕçлеççĕ.

Промышленноçлă предприятисенчен «Труженик» заводри пуçламĕш парторганизаци япăх ĕçленине палăртмалла. Вăл производство ĕçне лайăхлатассишĕн, продукцин хăйне ларакан хакне чакарассишĕн, социализмлă ăмăртупа стахановла движенине куллен сарса пырассишĕн тăрăшман. Ăна çакăнтан та аван курма пулать: завод 1940 çулти плана 95,4 процент, кăçалхи 1-мĕш квартал планне 73 процент çеç тултарнă, 1939 çултипе танлаштарсан, иртнĕ çулта продукцин хăйне ларакан хакне 12 процент ӳстернĕ т. ыт. те.

Пĕтĕмпе 5 парторганизаци ĕçне çителĕксĕр тесе йышăннă, вĕсенче секретарьсем пулса ĕçлеме çĕнĕ, пултарулла çынсене суйланă.

Парторганизацисенчи отчетпа суйлав пухăвĕсенче уйрăмăнах çамрăк коммунистсен политикăллă активлăхĕ ӳсни курăнать, парторганизацине вĕсене ытларах суйлаççĕ.

С. САВАДЕРОВ.

ВКП(б) Çĕмĕрле райкомĕн организаторски отдел заведующийĕ.

КОНСУЛЬТАЦИ

Ĕçлеве социализмла организацилессин тĕп принципĕсем

Ĕçлев—этем пурнăçĕн пирвайхи тата тĕп условийĕ. Этеме пурнăç пурăнма кирлĕ япаласене çутçанталăкран ĕçлеме пăхăнма илсе тăма пулать. Производительлĕ вăйсем кучухнехи çуллĕсенче ситнĕ чухне этемĕн, вăтамран пĕр 16—17 çултан пуçласа илсе шутласан, малалли пурнăçĕн, сахалтан та, виççĕмĕш пайĕ ĕçре иртет. Çапла вара ĕçлев—этем пурнăçĕн пĕр пайĕ пулса тăрать.

Ĕçлев этем пурнăçĕн пĕр пайĕ пулать пулсан, паллах, ĕçлеве организацилес ыйту мĕнле те пулин техникăлă ыйту мар, обществăллă ыйту пулса тăрать.

* * *

Кашни обществăллă строй, производствăн кашни уйрăм меслечĕ ĕçлеве хăйне май организацилет. Производствăллă отношенисем улшăннă май ĕçлеве организацилесси те улшăнса пырать.

Пĕрисем пуçпулса, теприсем пăхăнса янă условире ĕçлеве организацилес меслет вăл—çынсене е ухсăнах (чура-пăхпа крепостной стройра), е ухсăн пысĕнмелле мар (капитализма стройра) ирĕксĕрлесе ĕçлеттерес йĕрке пулма тăрать. Класлă эксплоататциллĕ обществăсенче ĕçлев обществăн пĕр пайĕшĕн (ĕççыннисемшĕн) кăна «пӳрсе хăвани» пулса тăрать, обществăн тепĕр пайĕ (эксплоататорсем) физически ĕçе хутшăнмасăр, çынсем ĕçлесе тунипе ӳртĕнсе пурăнать.

Капитализмлă обществăра рабочин,—вăл производство хатĕрĕсен хуçи пулман цирки,—хăйĕн ĕç вăйне сутма тăрах кĕрĕпсе ĕçлеме), апла пулсан, хăйĕн пурнăçĕн пĕр пайне капиталиста сутма тивет. Çакăн пирки вара капиталлăмлă обществăри рабочишĕн ĕçлев унăн пурнăçĕн пĕр пайĕ пулма пăрахать, мĕншĕн тесен ĕç вăйне сутнă хыççăн ĕçлев рабочи харпăрлăхĕ пулма пăрахать, вăл ĕç вăйне сутăн илекен капиталистăн харпăрлăхĕ пулса тăрать. Капитализмлă обществăри рабочи ĕçре пулни, эксплоататоршăн ĕçлени—вăл пурнăçа сая янине пĕлтерет. Класлă эксплоатациллĕ обществăсенче ĕçлев рабочишĕн йывăрлăхран та йывăрлăх, каторга пулса тăрать. Кун пирки К. Маркс хăйĕн «Наемный труд и капитал» брошюринче акă мĕн çырать:

«Кун-каçинче вуникĕ сехет хушши тĕртекен, арлакан, шăтăк шăтаракан, çавăракан, çуртйĕр тăвакан, чавакан, чул ватакан, йывăр япаласене йăтса куçаракан т. ыт. те тăвакан рабочи — çав вуникĕ сехет хушши тĕртнине, арланине, шăтăк шăтарнине, çавăрнине, чавнине, чул ватнине хăйĕн пурнăçĕн палăрмĕш тесе, пурнăçĕ тесе шутлать-и? Йăлтах урăхла, пурнăç унăн çав ĕçхĕл чарăннă хыççăн,—апат сĕтелли хушшинче, трактир скамьи çинче, выран çинче,—пуçланать. Вуникĕ сехет хушши пыракан ĕçлев—тĕртни, арлани, шăтăк шăтарни енчен унăн ниме пĕлтерĕшсĕр, унăн вăл—ĕçсе-çиме, трактира çӳреме, выран çине выртса канма май паракан заработок анчах» (Соч., т. V, стр. 422).

Капитализмлă обществăри рабочи ĕçлеве йывăрлăх тесе шутлани çинчен каланипе пĕрлех, çакна та асăрхаттарас пулать,—буржуази хăй те физически ĕç çине темĕнле тивĕçсĕр пăхассине сарса тăрать.

* * *

Октябрьти Социализмлă Аслă революци пирĕн çĕршывра капитализмлă строя пĕтерсе хучĕ. Анчах та пĕтерсе лартнă капитализм хăйĕн наркăмăллă сăннине—ĕçлеве йывăрлăх тесе шутлассине, сахалтарах ĕçлес те нумайтарах илес туртăма çынсем хушшинче хăварнă. Çавăнпа ĕнтĕ В. И. Ленин Профессиллĕ Союзсен Пĕтĕм Российри II съездĕнче çапла каланă: «Рабочи кивĕ общество тасамарлăхĕнчен нихăçан та касайми хӳмепе уйăрăлса тăман. Унра капитализмлă обществăн психологийĕ пайтах тытăнса юлчĕ. Рабочисем çĕнĕ çынсем пулса тăрса мар, кивĕ тĕнчерен тасалса ситнĕ çынсем пулса мар çĕнĕ общество тăваççĕ, çав тасамарлăхра чĕркуççи таранах тăраççĕ. Çав тасамарлăхран тасалса ситесси пирки ĕмĕтленме килет кăнаха. Çавна хăвăртах тума пулать тесе шутлани калама çук пысăк утопи пулнă пулĕччĕ; практикăра вăл социализм патшалăхне пĕлĕт çине куçаракан утопи кăна пулнă пулĕччĕ» (Соч., т. XXIII, стр. 490).

Капитализмлă общество тасамарлăхĕсенчен тасалса пырасси, ĕç çине социализмла пăхасси куллен-кунхи ĕçре, социализмшăн пыракан кĕрешӳре пулса пырать. Ĕççыннисене коммунистла воспитани парас ĕçре паян куна эпир пысăк ăнăçусемех турăмăр, анчах ку тĕлĕшпе тумалли те сахал мар. Çынсен ăстăнăнче капитализм юлашкийĕсене пĕтĕмпех пĕтересси—пирĕн политикăллă тĕп задача пулса тăрать.

* * *

Социализмлă обществăра çынсем пуринĕн харпăрлăхĕ пулса тăракан производство хатĕрĕсемпе тата кашни харпăрхăй пултарнă таран ĕçлеççĕ.

Пирĕн социализмлă çĕршывра ĕçлев акă мĕнле организациленет: пĕр енчен, пурнăçăн тĕп условийĕ пулса тăракан ĕçлеве кашни кирлĕ пек хутшăнассине никам та тепĕр çын çине йăвантарса яма пултараймасть: «Кам ĕçлемест, вăл çимест»; тепĕр енчен, ĕнтĕ ĕçлев,—кашни çынна пур енпе те аталанма, кашнине унăн физически тата ăс-пуç пултарулăхĕсене палăртма кирлĕ условисене пурне те туса парса, этеме чăн та ирĕке кăлараканах хатĕр пулса тăрать. Пирĕн çĕршывра ĕçлеве организацилениех чи палла енĕ вăл ĕççыннисен масси ĕçлеве ăстăнлăн та хаваслăн хутшăнни пулса тăрать. Ĕçлев пирĕн çĕршывра чыслăх, мухтавлăх, чаплăх тата паттăрлăх ĕçĕ пулса пырать.

Капитализмла производство пĕр çын хуçа пулса тăрассине, производствăна тытса тăрас ĕçе урăх çынсем хутшăнинне тĕпренех сивлессине пĕлтерет пулсан, ĕçлеве социализмла организацилесси—пĕтĕм рабочисем ку ĕçе, — производствăна ĕçлеве организацилессине,—массăллăн хутшăнни çинче никĕсленсе тăрать. Ахаль мар ĕнтĕ ВКП(б) Пĕтĕм Союзри XVIII конференцийĕ предприятисенче тата наркоматсенче производствăллă-хуçалăхлă активсем, производствăллă совещанисем ирттерме кирли çинчен çирĕппĕн астутарса хăварчĕ. Анчах та рабочисем ĕçлеве организацилес çĕре анлăн хутшăнни, паллах, ĕçлеве социализмла организацилессин тепĕр принципне — единоначалине — пăрахăçа кăлармасть. мĕншĕн тесен единоначали те, рабочисен производствăллă хастарлăхĕ те хăйсен умне пĕр задачах лартаççĕ — вăл коммунизмлă общество тăвасси. Партин XVIII конференцийĕ единоначалине çирĕплетсех пыма хушрĕ.

Пирĕн çĕршывра рабочи производство хуçи пулса тăрать. Рабочийĕн производствăри çĕнĕ ролĕ—производствăна организацилекен тата ăна ертсе пыракан ролĕ—пирĕн рабочи умне, капитализмлă çĕршывсенчи рабочисемпе танлаштарсан, çĕнĕ задачăсем кăларса тăратать. Пирĕн рабочи пур енпе те ăталаннă рабочи, обществăлла производствăн пит те кăткăс системине витĕрех ăнланса илнĕ рабочи пулмалла.

Рабочи класăн, хăйĕн çĕнĕ рольне ăнăçлăн пурнăçласа пыма, пур енпе те тата пур майсемпе те вĕреннемелле. Рядовой рабочисен кăна мар, ертсе пыракан юлташсен те массăсене организацилеме, производствăна тытса пыма çине тăрса вĕреннемелле.

Социализмлă обществăра ĕçлеве çынсем ăстăнлăн хутшăнни, çынсем пуçарулăхне анлăлатнăçем анлăлатса, çынсене малаллах илсе пырать, кайри ретре пыракан сийсене те ĕçлеве лайăхрах та тĕрĕсрех организацилессишĕн кĕрешме çĕклентерет, — мĕншĕн тесен ĕçлеве лайăхрах та тĕрĕсрех организацилени ĕççыннисен пурнăçне лайăхрах та савăнăçлăрах тăвать.

Социализмлă ăмăртăва—ĕçлеве организацилессин тĕп принципĕсенчен пĕрине—социализмлă ăмăртăвăн çулĕ сыпăкĕ пулса тăракан стахановла движенине пур майсемпе те сарса, вăйлатса пымалла. Ку тĕлĕшпе партипе комсомол организацийĕсем тата профсоюзсем умĕнче калама çук пысăк задачăсем тăраççĕ. Ку задачăсене тивĕçлипе татса пама пĕтĕм вăйран тăрăшас пулать. Кунта çакна манма юрамасть — социализмлă ăмăрту вăл ĕççыннисен йышлă массисене социализмлă, коммунизмлă воспитани парас ĕçре питех те тĕрĕсленнĕ хĕçпăшал, ĕçлевĕн социализмлă дисциплини мĕн чухлĕ пурнăçа кĕрсе пынин виçийĕ пулса тăрать.

Социализмлă ăмăрту, ĕçлеве организацилессин формисенчен пĕри пулса тăрса, ĕçлеве социализмла организацилессин тата тепĕр формипе—учотпа контроле организацилессипе — тачă сыхăнса тăрать.

В. И. Ленин хăйĕн «Очередные задачи Советской власти» брошюринче кун пирки акă мĕн калать:

«Производствăна тата продуктсене валеçессине пит те çирĕппĕн те пĕтĕм халăхпа учета илсе контроллесе пырассине организацилесси ĕçе тата параканни пулса тăрать... унăн çăн социализма пурнăçлассин иккĕмĕш тата çав терĕк паха условийĕ, материаллă условийĕ çинчен—шăпах ĕç тухăçлăхне пĕтĕм нациллĕ масштабпа ӳстересси çинчен—сăмах та пулма пултарайманть» (Соч., XXII, стр. 444).

Социализмлă, коммунизмлă общество çĕнтермешкĕн пит те çирĕппĕн те тĕрĕс пулса пыракан учетпа контроль кирлĕ.

Социализмлă ăмăрту, ĕçлеве организацилессин тĕп формисенчен пĕрийĕ пулнипе пĕрлех,—ĕçлеве социализмла организацилессин тепĕр формине—пĕтĕм халăхпа учета илсе контроллесе пырассине—пурнăçа кĕртессин обязательнăй условийĕ пулса тăрать. Социализмлă ăмăртупа пит те тачă сыхăнса тăракан учетпа контролĕн кучухнехи форми вăл сдельщина тăрăх тата премиллĕ формăпа тӳлесе пыни пулать: премиллĕ формăн чи çӳлерех форми ĕнтĕ — прогрессиллĕ-премиллĕ форма.

Социализмăн тискер тăшманĕсем — социализм вăл пур çынсен потребноçĕсене пĕрешкеллетет, пĕр виçеллĕ тăвать, çынăн пуçарулăхне, тимлĕхне путлантарать, тесе сахал мар элек сарчĕç тата сараççĕ те. Анчах та ленинла-сталинла социализм çынсен потребноçĕсене пĕрешкеллетнине, çынсен пуçарулăхне путлантарнине йышăнмасть. Йăлтах урăхла, социализм принципĕ: кашни хăйĕн пултарулăхне кура, кашнине унăн ĕçлевне тата ĕçлев пахалăхне кура, тесе калать.

Ĕçукçи çинчен ВКП(б) Пĕтĕм Союзри XVIII конференцийĕ Маленков юлташ доклачĕ тăрăх йышăннă резолюцире акă мĕн каланă:

«...**Ĕçукçи тĕлĕшĕнче** рабочисене ĕç тăрăх, ертсе пырас ĕçри работниксене премиллĕ система тăрăх тата квалификацийлĕ ĕçшĕн квалификацишĕр ĕçрен нумайрах тӳлесе, **лайăх ĕçлекенсене материальнăй хавхалантарса пырас принципа çирĕппĕн тата çине тăрса пурнăçа кĕртсе пымалла.**

Ĕçукçи тĕлĕшĕнчен уравниловкăн çĕрĕк практикине вĕçне çитичех пĕтермелле тата çакна пурнăçа кĕртмелле: ĕç тухăçлăхне хăпартас ĕçре, апла пулсан, пирĕн пĕтĕм халăх хуçалăхне вăйлатас ĕçре те сдельщинăпа премилле системă татах та ытларах паха та пысăк рычагсем пулса тăмалла».

Тӳрех калас пулать, ку тĕлĕшпе пирĕн республикăри заводсенче ĕçсем

План тата ĕçсем

ÇЕРПУ. (Хамăр корр.). Çĕнĕ Салари «Красный бригадир» колхоз пысăк колхоз мар. Анчах та вăл хăйĕн ĕçĕсемпе пĕтĕм район умĕнче палла вырăнта тăрать. Ялхуçалăх культурисен тухăçлăхне тата выльăх-чĕрлĕх продуктивлăхне çулран-çулах ӳстерсе пыраççĕ. Пахчаçимĕç тата уйрăмăнах арбуз ӳнăхса ӳстерес тĕлĕшпе ку колхозра тунă ӳсĕмсене пĕтĕм республика пĕлсе тăрать.

ВКП(б) Центральный Комитечĕпе СССР Совнаркомĕ «Ялхуçалăх культурисен тухăçлăхне тата выльăх-чĕрлĕх продуктивлăхне ӳстернĕшĕн Чăваш АССР Республикинчи колхозниксене ĕçшĕн хушса тӳлесси çинчен» йышăннă постановлени колхозниксен ĕçлес хаваслăхне çĕклерĕ. Кунта кашнин пĕр ĕмĕт — лайăхрах ĕçлес те колхоза тĕреклетес. Кашни колхозник хăй сине татăклă обязательство илет, ăна вăхăтра пурнăçа кĕртсе пырать. Çак кунсенче фермăри ĕнесенчен сĕт суса илмелли плана туса çирĕплетнĕ. Вăл плана Чăвашсен зоотехникăллă опытлă станцинчи научнăй сотрудник Кухарский юлташ тата ĕне ферминче ĕçлекенсем хăйсем активлăн хутшăнса ĕçленипе тунă. Район панă план тăрăх кăçал вăтам шутпа кашни ĕнерен 1350 литр сĕт суса илмелле. Паллах, пур ĕнесем те сĕт пĕр пек памаççĕ. Çавăнпа та государство планне дояркăсем патне çитернĕ чухне кашни ĕне иртнĕ 2—3 çул хушшинче вăтам шутпа миçе литр сĕт панине тата ĕнесене мĕнле апатпа тăрантарнине тĕплĕн шута илнĕ. Кăçал «Красуля», «Пестранка», «Рекордистка» ĕнесенчен 1630-шер литр, «Светлана», «Телашка» ĕнесенчен 1500-шер литр сĕт суса илмелле. Мĕншĕн-ха çав вăхăтрах «Манжетка» 700 литр кăна сĕт парать? Вăл кăçал пĕрремĕш хут тата июнь уйăхне çитсен çеç пăрулать. Апрель уйăхĕнче фермăри пĕтĕм ĕнесенчен 2159 литр, май уйăхĕнче 1951 литр сĕт суса илме палăртнă. Мĕншĕн-ха май уйăхĕнче сахалрах суса илмелле? «Забытка», «Искра», «Калинка», «Сорока» тата «Жнейка» ĕнесен вăл уйăхра пăрулас вăхăт çывхарса килет. Вĕсем ун чухне сĕт памаççĕ. Государство планне уйăхсем тăрăх пайланă чухне çакăн пек сăлтавсене шута илнĕ. Фермăри ĕнесенчен сĕт суса илес тĕлĕшпе государство планне пур енĕпе те активлăн сӳтсе-явса çирĕплетнĕ.

Дояркăсем хушшинче сĕте планран иртнерсе суса илессишĕн ăмăрту сарăлса пырать. Кашни доярка хăй сине производствăллă обязательство илнĕ. План тăрăх доярка А. Ферапонтова юлташăн март уйăхĕнче 528 литр сĕт суса илмелле пулнă. Вăл плана кăна мар, 649 литр сума пулса илнĕ обязательствăна та ытлашшипех тултарнă —823 литр ытла сĕт суса илнĕ. Çавăн пекех дояркăсем А. Михайлова тата М. Буинцева юлташсем те производствăллă обязательствăна ытлашшипех тултарса пыраççĕ. Март уйăхĕнче Михайлова 1036 литр, Буинцева 1032 литр ытла сĕт суса илнĕ.

Колхоз правленийĕ фермăри работниксен ĕçне тĕрĕс учета илсе пырать. ВКП(б) Центральный Комитечĕпе СССР Совнаркомĕ 1941 çулти мартăн 13-мĕшĕнче йышăннă постановлени тăрăх, март уйăхĕнчи плана иртерсе тултарнăшăн доярка Буинцева юлташ 80 литр, Михайлова — 79 литр, Ферапонтова 47 литр сĕт илме тивĕçлĕ. Колхоз правленийĕ çакна тĕплĕн шута илсе хунă.

«Красный бригадир» колхозăн ĕне ферминчи работниксем зоотехникăна пурнăçа кĕртсе пыраççĕ. Çавăнпа та ĕнтĕ вĕсен ĕçри ӳсĕмсем пысăк. Кунпа пĕрлех Чăвашсен зоотехникăллă опытлă станцийĕн научнăй сотрудникĕ Кухарский юлташ колхоза пысăк пулăшу панине палăртма кирлĕ.

Фермăра ĕçлекенсем пиншер литр сĕт суса илме обязательство йышăннă. Иккĕленмелли çук, обязательствăна ăнăçлăн пурнăçа кĕртĕç.

Т. МАЙОРОВ.

Красноармейски МТ Станцинче. УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: 6-мĕш №-лĕ тракторнăй бригадăн бригадирĕ **Н. Иванов** юлташ, вăл тракторсене юсас плана 175 процент тултарнă.

Г. Костин фото-ӳкерчĕкĕ.

▲ ▲ ▲

Совет учрежденийĕсене таса тытассишĕн

Совет учрежденийĕсенче ĕçлекен работниксем яланах ĕççыннисемпе тачă çыхăнса тăраççĕ. Вĕсем патне кулленех ĕççыннисем тĕрлĕ ыйтусемпе пырса çӳреççĕ. Ĕçпе пынă çын чи малтан учрежденинчи тасалăха тата унта ĕçлекен работниксен культурăлăхĕ çине çавăрăнса пăхать. Çавăнпа та ĕнтĕ, кашни учреждени руководителĕн хăй ĕçлекен çурт-йĕре таса тытса усрамалла, ĕçпе пынă ĕççыннисене культурлă йышăнас пулать. Ку тĕлĕшпе пирĕн чылай учрежденисем кая юлнă. Тасалăхшăн сăмах вĕççĕн кăна кĕрешме юратакан çынсем пĕтмен-ха. Акă, Вăрнарпа Шăхасан тата Вăрмар районĕсенчи ĕççыннисем депутачĕсен исполкомĕсенех илсе пăхар. Çак исполкомсен сурчĕсенче çаплах культурăлăх çук-ха. Çав вăхăтрах партипе совет организацисен руководителĕсем кашни сăмахрах тасалăх çинчен асăнаççĕ. Шăхасан райисполком çуртĕнчи пӳлĕмсенче таса мар, урайсене вăхăтра çуса тăмаççĕ.

Райфори работниксем те тасалăхшăн кĕрешмеççĕ. Стена сумĕнчи тусансене тасатман. Чӳрече кантăкĕсем табак тĕтĕмĕпе хуралса ларнă. Сĕтел пичĕсене чернилсемпе вараласа пĕтернĕ. Тумтирсене çакма вешалка та çук, хăшпĕр работниксем тумтирсемпех ĕçлесе лараççĕ, хăшпĕрисем хăйсен тумтирĕсене пукансем çине хунă.

Кун пек тĕслĕхсене ытти районсенче те тĕл пулма пулать. Вăрнар райисполкомĕн кашни пӳлĕмĕнче пекех «не курить, не сорить», текен хут татăкĕсем çакăнса тăраççĕ. Анчах çав правилăна исполкомра ĕçлекенсенчен пĕри те пăхăнмаççĕ. Общий отдел заведующийĕ Михайлов юлташ лайăх хозяйственник. вăл кашни пӳлĕм валлинех, кирлĕ мар хут татăкĕсене пăрахма пĕрер корзинка илсе панă. Кашни сĕтел çинчех, пирус тĕпĕсене пăрахма, пепельница ларать. Апла пулин те, райфопа райзора тата УНХУ-ра ĕçлекен работниксем хут татăкĕсене корзинкăна мар, урайне пăрахса тултараççĕ. Аçта пăхнă, унта пирус тĕпĕсем йăваланса выртаççĕ. Çапла вара, çак асăннă отделсем ĕç кунĕ пĕтнĕ çĕрелле витери пек пулса каяççĕ.

Вăрнарти хресчен çуртĕнче те тасалăхпа йĕркелĕх çук. Урайсене таса тытса усрамаççĕ, хăнкăласене пĕтерес пирки те нимĕн те тумаççĕ. Урай хăмисем çĕрсе шăтнă т. ыт. те. Апла пулин те райсовет исполкомĕ хресчен çуртне кĕрсе выртаканскенчен хваттер уксине пысăк хуласенчипе пĕр танах илет.

Хăшпĕр руководительсем пирĕн пата çынсем нумай çӳреççĕ, çавăнпа та тасалăх тума çук, теççĕ. Тепĕр çĕрте тата, учрежденисенчи тасалăхшăн техничкăсен кĕрешмелле, тесе шутлаççĕ. Çапла шутлани пачах тĕрĕс мар, учрежденисенче чăн-чăнах тасалăхпа культурăллăх пултăр тесен, техничкăсем сине çеç шанмалла мар, учреждени руководителĕнчен пуçласа кашни работникăн кĕрешни кирлĕ.

ВКП(б) XVIII конференцийĕ предприятисемпе транспортра тасалăхпа йĕркелĕх туса хурасси çинчен татăклăн каласа хăварчĕ. Çакă вăл совет учрежденийĕсене те пĕтĕмпех пырса тивет. Кашни руководителĕн хăй ĕçлекен учрежденисенче йĕркелĕх туса хума тивĕçлĕ.

С. АСТАФЬЕВ.

Обязательствăна тултартăмăр

ÇЕРПУ. Районри финанс работникĕсем пĕрремĕш квартал планне 106 процент тултарнă. Май уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăртăва хутшăниса, финанс работникĕсем хăйсем сине татăклă обязательствăсем илнĕччĕ. Финанс ĕçĕн отличникĕ налог инспекторĕ Меркурьев юлташ хăйĕн участокĕн планне Май уявĕ тĕлне 75 процент таран тултарма пулнă. Налог агенчĕ Балянов юлташ хăйĕн участокĕн планне 100 процент тултарма пулнă. Финанс работникĕсем районри финанс планне Май уявĕ тĕлне 50 процент тултарассишĕн кĕрешрĕç. Плана ытлашшипех тултарса пыччĕç.

Налог агенчĕ Балянов хăйĕн планне 157 процент тултарнă.

Районĕпе 28 финагент хăйсен обязательствисене тултарнă.

Самообложени тата заем укçине пухас плансене чи малтан Иваново, Тĕнсĕр ялсовечĕсем тултарнă. Чылай ялсоветсем самообложени укçине пĕрремĕш кварталтах пухса çитернĕ.

Н. ЯСНОПОЛЬСКИЙ.
Райфинплай заведующийĕ.

Пĕрремĕш комплексра

Ирĕкрен, çурхи уçă сывлăш шăмшăка ачашланă çĕртен цеха кĕрсен, Сергей Петрович йĕри-тавра тинкерчĕ те икĕ лини хушшипе малалла утрĕ. Сулахайра — халь çеç сăрланă вагонсем, сылтăмра — платформăсем. Вĕсем çине «Построен Канаш. ВРЗ» тесе çырнă. Ун пек вагонсем халĕ Канаш урлă час-часах ирте-ирте каяççĕ.

Ĕç пуçланман-ха. Çапах та цеха рабочисем нумай пухăннă. Унта та кунта паян мĕн тăвасси çинчен калаçни илтĕнет. Цех коллективĕ нихăçан туман ĕçе тума хатĕрленнĕ пек туйăнать.

— Сывлăх сунатăп, Иван Архипович, — саламларĕ Сергей Петрович, платформа умĕнче тăракан вăтам пӳллĕ çын патне çитсен.

Иван Архипович çавăрăнса пăхрĕ. Умра цех начальникĕ Сергей Петрович Трухин тăрать.

— Сывă-ха, хăвăр мĕнле, — ответлерĕ вăл.—Шăлтах аптрамалла, тепĕр виçĕ кунтан буксем пулмасан, татах...

— Вунпилĕк букс илтĕмĕр, — пĕлтерчĕ Трухин юлташ, — урăх хăçан пуласси паллă мар.

— Вунпилĕк букс икĕ кун ĕçлеме те çитмест. Малалла мĕнле, хатĕр платформăсене те кăларма пулмасть-и вара?

Иван Архипович кӳренчĕ. Платформăсем çине пăхса илчĕ те вагонсем тăвакан комплекс татах кая юлма пултарасси, вăл хăрушлăха пĕтерме мĕн кирли çинчен каласа пачĕ. Унтан вара вĕсем иккĕш те пĕр-пĕрине нимĕн шарламасăрах аякkалла уйăралчĕç.

...Çĕнĕ вагонсем тăвакан комплексăн историйĕ вăрăм мар. Иртнĕ çулти июнь уйăхĕнче СССР çулĕпĕр Халăх Комиссарĕ Канашри вагонсем юсакан заводра вагонсем тăвакан цех организацилесси çинчен приказ кăларнă. Çак цех валли вагонсем юсакан цехри икĕ линие тата техникăна лайăх пĕлекен работниксем уйăрса панă. Вĕсен шутĕнче Иван Архипович та пулнă. Кашни лини çинче пĕр комплекс ĕçлемелле пулнă. Çакăн хыççăн вара, июнĕн 6-мĕшĕнчен пуçласа, ку цехра вагонсем тума тытăннă. Çав кунхине смена пуçланиччен чылай малтан цеха А. Голубев юлташ бригади пырса çитнĕ. Унăн бригадинчи слесарьсем пĕрремĕш вагонăн рамине пухма тытăннă. Шевелюрсене майлаштарса вырнаçтарнă, болтсене çирĕплетнĕ. Кашнимĕн те пулин тума тăрăшнă. Анчах хăшпĕр çĕрте ĕç ăнман. Вара слесарьсене пулăшма мастерсем, инженерсем пынă. Пĕрлешӳллĕ вăй сĕнтернĕ, пĕрремĕш вагонăн рами пĕчĕккĕн-пĕчĕккĕнех хăйĕн формине йышăнса пынă.

Çакă вăл вунă уйăх каялла пулнă. Ун хыççăнхи кунсем те цех работникĕсемшĕн нумай тĕрлĕ кăмăлсăр хыпарсем илсе килнĕ. Василий Алексеев юлташ ертсе пыракан электросварщиксен группи малтанхи кунсенчех нормăна тултарма тытăннă. Çĕнĕ вагонсем кăларма рамăсем кирлĕ чухлех пулнă. Çапах та вагонсем цехран тухман, цех коллективĕ хăйĕн планне тултарса пырайман.

— Ĕç пулать-и ку? Ĕçлетĕн-ĕçлетĕн, вагонсем тухнине кураймастăн! — вăрçнă электросварщиксем.

Халĕ иртнĕ çулхи пек мар.

Ĕçе тытăнма пĕлтерекен гудок сасси янраса карĕ, çав самантрах цех та сывлăшпа ĕçлекен молотоксен, сверлоксен шавĕпе тулчĕ. Унта та, кунта та сиçĕм евĕрлĕ кăвак сутă йăлкăшать. Кашни рабочи, вăл слесарь, электросварщик, столяр е маляр пулса ĕçлет-и, хăйĕн ĕçне хăюллăн тăвать.

Пĕтĕм ĕç кунĕ хĕрӳллĕн иртет. Смена пĕтнĕ хыççăн вара рабочисем хăйсен ĕçне итогĕсене сӳтсе-явма хĕрлĕ кĕтесе пухăнаççĕ. Акă паян та тăвăта сехет иртсенех хĕрлĕ кĕтес халăхпа тулса ларчĕ. Комплекс начальникĕ Иван Архипович Дубовой юлташ цехри рабочисем паян мĕнле ĕçлени çинчен, малашне мĕн-мĕн тумалли çинчен калама пуçларĕ.

— Пĕрремĕш кварталти плана тултарнă хыççăн, комплекс май уявĕ умĕнхи ăмăртăва хутшăнса, планран иртнерсе 10 платформа туса кăларма пулнă.

Халиччен тунă ӳсĕмсем çинчен Иван Архипович питĕ кĕскен каларĕ. Рабочисем унăн кашни сăмахне тимлĕн итлесе лараççĕ. Юлашкинчен вăл цех планне ытлашшипех тултармалли майсем çинчен ăнлантарчĕ.

— Мĕнле, çав 5 платформăна тăватпăр-и, юлташсем? — ыйтрĕ рабочисенчен Иван Архипович.

— Тăватпăр!—ответлерĕç рабочисем.

Апрелĕн 27-мĕшĕнчен пуçласа вагонсем юсакан цеха пулăшма тытăнмалла. Вăл плана тултараймасан, пĕтĕм завод коллективĕн ĕçĕ пăрахăçа тухать.

— Алексеев юлташ, сирĕн ĕç мĕнле, каласа парăр?—ыйтрĕ каллех Иван Архипович.

Василий Алексеев ура çине тăчĕ те çынсем çине пăхса илчĕ, хăюллăн калама пуçларĕ:

— Манăн группа уйăхри плана тултарса çитерчĕ, рамăсем хатĕр. Эпир пулăшма пултаратпăр.

Ку сăмахсене начальник килĕштерчĕ пулас, Алексеев ларнă-ларманах ура çине тăчĕ те:

— Рамăсем пур, вагонсем тăвас пулать!—тесе пĕлтерчĕ тепĕр хут.

... Алексеев юлташ тата унăн группинчи çынсем те ытти рабочисенчен нимĕнпе те уйăрăлса тăмаççĕ. Групповод Алексеев чăваш, 1934 çулччен—вагонсем юсакан заводра ĕçлеме пуçличчен — унăн нимĕнле професси те пулман. Заводра вĕреннĕ, унтах квалификаци илнĕ. Лайăх ĕçленине кура ăна группăна ертсе пыма лартнă. Группăна лайăх ертсе пыма ĕçе пĕлни çеç çителĕксĕр, кунта çынсене пĕлни, вĕренме пултарулăх пурри кирлĕ. Чи малтанах Алексеев çавна тума тытăнать. Котляров юлташа 3-мĕш разрядран 5-мĕш разряда куçма пулăшнă, Владимирова стахановец пулма вĕрентнĕ.

Вагонсем тăвакан цехра Алексеев пек пултарулла çынсем сахал мар. Пĕтĕм коллектив ĕçлес пирки хăйсем çине татăклă обязательствăсем илсе, Шăхасан районĕнчи сутă-илӳ работникĕсене социализмлă ăмăртăва чĕннĕ.

Çакăн пек лайăх примерсем ытти районсенче те нумай. Çав вăхăтрах хăшпĕр райпотребсоюзсенче çитменлĕхсем те сахал мар-ха. Тĕслĕхрен, Кувакино райпотребсоюзĕ те халичченех сĕрмелли материалсене кӳрсе килмен. Çак районра лаша кӳлмелли хатĕрсем, тимĕр сенĕксем те çук. Çавăн пекех, Советски райпотребсоюзĕ те çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе çителĕксĕр ĕçлет. Паянчченех трактористсем валли фуфайкăсем тата шароварсем кӳрсе килсе сутман. Пĕр сельпора та сутлăх тимĕр кĕреçе, сенĕк çук. Сутă-илӳ работникĕсем хушшинче социализмлă ăмăртăва сарса яман. Çуракине вăхăтĕнче таварсене алă вĕççĕн сутма та çынсем тупса хатĕрлемен.

Сĕрмелли материалсем Хĕрлĕ Чутай, Калинински тата Куславкка районĕсенче те çук. Çак районсенче те çуракине вăхăтĕнче таварсене лавсемпе сӳресе тата алă вĕççĕн сутма çынсем çитмеççĕ. Таварсене лавсем çинчен сутса сӳреме колхозсемпе договор туман. Сельпосем вырăнта туса кăларнă таварсемпе сахал сутă-илӳ тăваççĕ. Вырăнсенчи промартельсем те райсоюзсем валли планпа пăхнă таварсене (фуфайка, шароварă) вăхăтра çĕлесе памаççĕ.

Чăваштребсоюз президиумĕ çуракине хатĕрленес ĕçри çитменлĕхсене хăвăрт пĕтермĕ хушса хăварчĕ. Пур райпотребсоюзсене

Европăри тата Африкăри вăрçă

(Вăрçă ĕçĕсен дневникĕ)

Англипе Германи хушшинчи фронтра авиаци чылаях пысăк активлăхпа кĕрешни палăрать. Ыран майăн 4-мĕш тенĕ чух çĕрле, тенĕ Германи командованийĕн сводкинче, Германин çĕнтĕшер бомбардировщикĕсем Ливерпуль çине темиçе сехет хушши бомбăсем пăрахса çуренĕ. Çавăн пекех Центральнăй Англин хĕвеланăç сыранĕнчи тепĕр пысăк порт çине бомбăсем пырса пăрахнă. Германи авиацийĕ Англин хĕвелтухăç сыранĕнчи Мидлзброри портпа промышленноçлă сооруженисем çине, çавăн пекех тата кăнтăр Англии çар завочĕпе çĕрлехи аэродром çинĕ пырса тапăннă.

Çав каçах Англи авиацийĕ Кельн çине пырса тапăннă. Рейтер агентстви пĕлтерĕ: Кельнри промышленноçлă тĕп район çине вут чĕртсе яракан бомбăсем пиннер бомба пăрахнă. Германин Брестра пытанса тăракан «Шарнгорст» тата «Гнейзенау» ятлă линкорĕсем çине пысăк калибрлă бомбăсем пăрахнă. Англи самолечĕсем çавăн пекех Шербургпа Булоньри доксем çине, Роттердамри, Эссенри, Дюссельдорфри нефтехранилищĕсем çине тата Кăнтăр Норвегири аэродром çине бомбăсем пырса пăрахнă.

* * *

Çурçĕр Африкăра вăрçă ĕçĕсем Тобрук районĕнче тата Ливипе Египет чиккинче, Соллум секторĕнче пулса иртнĕ. Германи командованийĕн сводкинче çапла каланă: Германин Африкăри корпусĕн часĕсем Тобрукри укрепленийĕлле района пырса кĕнĕ, англичансен контратакисене сирсе янă. Англи командованийĕн сводкинче каланă тăрăх, Англин Тобрука хŭтлекен войскисем хăйсен позицийĕсене пĕрне те паман тата противнике пысăк çухатусем кŭнĕ. Соллум районĕнче нимĕнле пысăк ĕçсемех те пулман.

Вăтаçĕр тинĕсĕн бассейнĕнче çапăçакан енсен авиацийĕсем чылаях активлăн кĕрешнĕ. Германи командованийĕн сводкинче каланă тăрăх, Германипе Италин пикировка тăвакан бомбардировщикĕсем Тобрукри порт сооруженийĕсемпе укрепленисем çине бомбăсем пырса пăрахнă. Бомбăсене англичансен артиллери позицийĕсем, танксемпе войскăсем çине пăрахнă. Çавăн пекех Мерса-Матрух çине те Германипе Италли авиацийĕ пырса тапăннă. Вăтаçĕр тинĕсĕн хĕвелтухăç пайĕнчи Суда бухтинче (Крит утравĕ) Германи самолечĕсем Англин суту-илŭ тумалли пĕр пароходне путарнă. Германи самолечĕсен соединенийĕсем çавăн пекех Ла-Валлета çине (Мальта утравĕ) пырса тапăннă, верфьсем, нефтехранилищĕсем, зенитнăй установкăсемпе доксем çине бомбăсем пăрахнă. Англи командованийĕн сводкинче каланă тăрăх, Англи авиацийĕ Эль-Эдем сывăхĕнче Германипе Итали войскисен мотомехтранспорчĕн колонни çине пырса тапăннă. Çавăн пекех Триполипе Бенгази çине те бомбăсем пырса пăрахнă. Вăтаçĕр тинĕсĕрте Англи бомбардировщикĕсем противникăн пĕр эсминецĕпе грузовой пароходне путарнă.

Хĕвелтухăç Африкăра, Абиссинире, Англи командованийĕн сводкинче каланă тăрăх, Англи войскисем Амба-Алага патнелле (Аддис-Абеба патĕнчен çурçĕр енче) сывхарса пыраççĕ. Итали командованийĕн сводкинче каланă тăрăх, Амба-Алага секторĕнче артиллери активлăхĕ палăрать. Çурçĕр енчен наступлени туса пыракан англичансен часĕсем паха позицине турtса илнĕ, кăнтăр енчен наступлени туса пыракан войскăсем Валдине турtса илнĕ (Десси патĕнчен çурçĕр еннелле 80 километртра). Англи авиацийĕ, тенĕ Англи сводкинче, итальянецсен Дебра, Табор районĕнчи артиллерипе оборона позицийĕсем çине тата Джиммăри аэродром çине бомбăсем пырса пăрахнă.

Майăн 4-мĕш. (ТАСС).

Комсомолецсен массăллă гимнастикăллă ăмăртăвĕсен итогĕсем

ВЛКСМ обкомĕнче комсомолецсен массăллă гимнастикăллă ăмăртăвĕсен татăклă итогĕсене тунă. Гимнастикăллă ăмăртусене республикăра пурĕ 55.856 çын хутшăннă, ГТО нормисене 54.548 çын пана, вăл путтран 24.743 çынни — комсомолра тăман çамрăксем.

Ăмăртусенче пĕрремĕш вырăна комсомолăн Сĕнтĕрвăрринчи организацийĕ (ВЛКСМ райкомĕн секретарĕ Юричев юлташ) çĕнтерсе илнĕ. Ăмăртусене кăтартуллăн тата организованнăн ирттернĕшĕн ăна ВЛКСМ обкомĕпе физкультурăпа спорт ĕçĕсен Чăваш АССР Совнаркомĕ çумĕнчи Комитечĕн кусса çŭрекен хĕрлĕ ялавне памалла тунă.

Иккĕмĕш вырăна ВЛКСМ Комсомольски районри организацийĕ (ВЛКСМ райкомĕн секретарĕ Марков юлташ), виççĕмĕш вырăна комсомолăн Çĕрпŭ районĕнчи организацийĕ, (ВЛКСМ райкомĕн секретарĕ Сафонов юлташ) йышăннă. Ăмăртусенче иккĕмĕшпе виççĕмĕш вырăн йышăннă комсомол организацийĕсене ВЛКСМ обкомĕн тата физкультурăпа спорт ĕçĕсен Чăваш АССР Совнаркомĕ çумĕнчи Комитечĕн грамотипе наградăланă.

Комсомолăн Улатăр (ВЛКСМ райкомĕн секретарĕ Федоров юлташ), Чкаловски (ВЛКСМ райкомĕн секретарĕ Хасьянов юлташ), Йĕпреç (ВЛКСМ райкомĕн секретарĕ Смирнов юлташ) районĕсенчи организацийĕсем, йĕлтĕр кросĕ пынă кунсенче кайри вырăнсенчен пĕринче пулнăскерсем, гимнастикăллă ăмăртусем пынă вăхăтра ĕçе вăйлатса, малтисен ретне тухрĕç.

Комсомолăн Елчĕк, Вăрмар районĕсенчи тата ытти районсенчи организацийĕсем, йĕлтĕр кросĕпе малти вырăнсенчен пĕрне йышăннăскерсем, гимнастикăллă ăмăртусем ирттерес ĕçре хăйсене начар кăтартрĕç, республикăра кайри вырăнсенче пулчĕç.

Армян литературин Мускаври декади

ЕРЕВАН, майăн 4-мĕш. (ТАСС). Армян литературин декадине хутшăнма паян писательсен пысăк группи Ереванран Мускава тухса кайнă.

* * *

Армян литературин Мускаври декади майăн 10-мĕшпе 20-мĕш хушшинче пулса иртет. Столица общественноçĕ армян литературин пĕр пин çурă çул хушшинчи историйĕпе, армян сыруллăхне пуçласа яракансен, кухучнехи пысăк поэтсен, прозаиксен тата драматургсен творчествипе паллашать.

Декада Мускаври писательсен клубĕнчи пысăк вечерпа уçăлать. Столицăри пысăк предприятисен культура дворецĕсемпе клубĕсенче темиçе вечер пулать. Майăн 17-мĕшĕнче Чайковский ячĕпе тăракан концерт залĕнче, майăн 20-мĕшĕнче Союзсен Çурчĕн Колоннăй залĕнче армян поэзийĕн вечерĕсем пуласçĕ. Çак вечерсенче армянсен паллă критикĕсемпе литературовечĕсем докладсем тăваççĕ. Декадăна армян литературине вырăсла куçарас тĕлĕшпе ĕçлекен вырăс писателĕсем, искусствăсен столицăри паллă мастерĕсем хутшăнаççĕ.

Декада кунĕсенче «Армени литературы» ятлă выставка уçăлать.

Арктика музейĕнчи çĕнĕ отдел

Ленинградра Арктика музейĕнче çĕнĕ отдел уçăлать. Çак отделри материалсем И. И. Черевичныйăн «СССР Н-169» самолечĕ çинче инçетри широтасем çине вĕçсе кайнă экспедици çинчен каласа параççĕ. Музея пыракансем Арктикăн халиччен тĕпчесе сăнаман секторĕн пысăк карттине курма пултараççĕ. Çав карттă çинче Черевичный вĕçевĕн çулĕсене тата полярниксен пăр çинчи лагерĕсем ăçта вырнаçса тăнине кăтартса панă. Арктика научно-исследовательски институчĕ экспедицин научнăй работникĕсем — Либин, Острекин тата Черниговский юлташсем туса ирттернĕ гидрологиллĕ, метеорологиллĕ, астрономиллĕ тата гравитациллĕ сăнавсен пирвайхи материалĕсене музея парать.

Кара-Калпакире Ленин ячĕпе тăракан канал

Кара-Калпакире Ленин ячĕпе тăракан ирригациллĕ пысăк канала ĕçе янă. Канал тăршшĕ — 128 километр. Вăл 40 пин гектар çĕре шăварса тăрать. 12 колхоз çĕнĕ çĕрсем çине куçнă та ĕнтĕ. Сывăх вăхăтрах кунта Тамдым районĕнчи вырăнтан-вырăна çŭрекенсем куçса килеççĕ.

Иракри вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, майăн 4-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: Ирак правительствин Вишире пичетлесе кăларнă коммюникинче каланă тăрăх, Мосулпа Хайфа хушшинчи нефтепровод сывăхĕнче вырнаçса тăракан Рутбари аэропортра пулса иртнĕ тытăçу вăхăтĕнче Англин 4 салтакĕпе Иракăн пĕр салтакне амантнă. Рутбара, тенĕ коммюникере, Ирак войскисем транспорт средствисене тата нефтепроводăн насос станцине турtса илнĕ. Майăн 3-мĕшĕнче ирхине аэродром çине бомбăсем пырса пăрахнă вăхăтра Хаббанире пушарсем тухнă. Англин аэродромра пулнă самолечĕсенчен пилĕшне пĕтерсе тăкнă. Ирак авиацийĕ Англин «Блэнхейм» йышши пĕр бомбардировщикне персе антарнă, хăйĕнне пĕр самолет çухатнă. Çав кунах Хаббанири аэродром тĕлĕнче сывлăшра пысăк çапăçу пулса иртнĕ. Ирак самолечĕсем Англи авиацине каялла хăваласа янă, хăйсен базисене чиперех тавăрăннă.

ЛОНДОН, майăн 4-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: Лондона илнĕ сведенисем тăрăх, Хаббани аэродромĕнче Англин темиçе самолетне пĕтерсе тăкнă. Летчиксем хушшинче вилнисемпе аманнисем пур. Англи бомбардировщикĕсен ĕçĕсене пула Иракăн аэродром çине персе тăнă темиçе орудине пĕтерсе тăкнă. Майăн 2-мĕшĕнче, тенĕ пĕлтерŭре, Ирак самолечĕсем аэродром çине пырса тапăнма хăтланнă, анчах та вĕсен ĕçĕ ăнăçман. Майăн 3-мĕшĕнче вăрçă ĕçĕсем малаллах сарăлса пынă. Анчах та Рутба патĕнче Ирак войскисем англичансен атакисене сирсе яни çинчен калакан хыпар пирки Лондонра нимĕн те паллă мар.

ЛОНДОН, майăн 4-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви Англин тинĕс министерстви къларнă коммюникене парать. Коммюникере çапла каланă: Басрăра Англи войскисем доксен районне, аэропорта тата электростанцине оккупациленĕ. Англи командованийĕ, тенĕ коммюникере, Ирак влаçĕсене ультиматум панă, Ирак войскисене каялла илсе кайма ыйтнă. Ирак çарĕн командованийĕн представителĕ çак требованине пурнăçа кĕртме килĕшнĕ. Анчах та ультиматум срокĕ тухнă тĕле çŭлте асăннă пунктсене тасатас тĕлĕшпе нимĕн те туман. Çавăнпа та Англи войскисем сывлăшран бомбăсем пырса пăрахса тата артиллеririпе персе тăрса, ультиматума пурнăçа кĕрттернĕ. Çар министерстви тата çапла пĕлтерет: Англи авиацийĕ Хаббанири аэродромпа халĕ те усă курать.

НЬЮ-ЙОРК, майăн 4-мĕш. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентствин Лондонри корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, Басра районĕнче Англи бомбардировщикĕсемпе артиллерийĕ Ирак войскисене каялла хăваласа янă.

Юнайтед пресс агентствин Лондонри корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, ĕçе лайăх пĕлекен çынсем хушшинче çапла каласçĕ: Германири радио индуссен войскисем Ирак çарне парăннă тесе пĕлтерни тĕрĕс мар.

Германипе Англи авиацийĕн çухатăвĕсем

ЛОНДОН, майăн 4-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: вăрçă пуçланнăранпа Англири çапăçусенче Германи авиацийĕн 3.310 самолет пĕтнĕ. Çак вăхăт хушшинче Англин 863 самолет шĕтнĕ, çав самолетсем çинче пулнă летчиксенчен 429 летчикĕ çăлăнса юлнă.

„Росглавхлеб“ тресчĕн производствăллă активĕ

Майăн 4—5-мĕшĕсенче «Росглавхлеб» Чăваш тресчĕн производствăллă-хуçалăхлă активĕн пухăвĕ пулса иртрĕ. Активра çăкăр пĕçерекен заводсен директорĕсем, производство заведующийĕсем, бригадирсем, стахановецсем, завком председателĕсем пулчĕç.

Актив трестăн 1941 çулти пĕрремĕш кварталти ĕçĕсем тата кăçалхи задачăсем çинчен сŭтсе-яврĕ. Ку ыйту тăрăх «Росглавхлеб» Чăваш тресчĕн управляющийĕ Ильин юлташ доклад туса пачĕ. Унăн пуçне актив Шупашкарти çăкăр пĕçерекен комбинатăн ĕçĕсем тата транспорт ĕçне лайăхлатасси çинчен Никулин юлташ докладне итлерĕ.

«Росглавхлеб» тресчĕ кăçалхи пĕрремĕш кварталта хăйĕн ĕçне чылаях лайăхлатнă пулин те (вăл плана 102 процент ытларах тултарнă), производствăллă плана пĕр тикĕс, кунран кун, уйăхран уйăха тултарса пыраймасть. Талăкăх график тăрăх, штурмсăр ĕçлесе йăлана кĕмен-ха. Продукцин ассортиментне пысăклатас тĕлĕшпе те ĕçсем ăнăçлăн пулса пымаççĕ. Уйрăмăнах булочнăй изделисем туса кăларасси начар, плана 63,5 процент кăна тултарнă.

Туса кăларнă продукцин хăйне лараканах хакне йŭнетессишĕн чăннипех большевикла кĕрешни сук. Ку тĕлĕшпе Улатăрти çăкăр пĕçерекен завод начар ĕçлет. Унăн хуçалăх расхочĕсем пысăк, кунта вут-шанкă штампи çунтарнă, завода шыв турттарса паракансен ĕçне тĕрĕс шута илмен пирки пиншер тенкĕ укçа ахаль расходлаççĕ. Чылай заводсенче михĕсене тирпейлĕн тыткаласа лайăх силлесе пушатман пирки темĕн чухлĕ çăнăх сая каять. Заводсен склад хуçалăхĕ, уйрăмăнах Шупашкарти çăкăр пĕçерекен комбинатăн склачĕсем пĕчĕккĕ, унсăр пуçне вĕсем юхăнса кайнă. Çавна пула тăкаксем сахал мар пуласçĕ.

Трест хăйĕн предприятийĕсене техникăллă пулăшу памасть. Технологи инструкцине пĕр предприятире те пăхăнса ĕçлемеççĕ. Çавна пула брак чакма мар, пĕрмаях ŭссе пырать, продукцин пахалăхĕ чакать. Иртнĕ çулти пĕрремĕш кварталпа танлаштарсан, кăçалхи пĕрремĕш кварталта брак хисепĕ 270 процент ытла ŭснĕ. Çăкăр пĕçерекен предприятисем кăçалхи çул 20 ятлă тĕрлĕ изделисем тума хăнăхса çитнĕ. Анчах çак изделисене массăллăн туса кăларма тытăнман. Ăна тума технологиллĕ çирĕп схема, калькуляци çукки чăрмантарать.

— Пирĕн предприятисем тутлă, илемлĕ тата йŭнĕ продукци туса кăларассишĕн кĕрешмеççĕ. Чылай предприятисенче çу, çăмарта, сахăр тата ытти хаклă продуктсем перекетленсе юлаççĕ, вĕсене норма тăрăх пĕлсе расходламаççĕ. Ку пачах пулмалла мар, —тет инженер Даровских юлташ хăйĕн сăмахĕнче. — Предприяти ăшĕнче пулакан брака шута илессине йĕркелемен. Брак тăвакансене ответ тытарни сук. Çĕмĕрле, Улатăр тата Шупашкар хулисенчи çăкăр пĕçерекен предприятисенче СССР Верховный Совечĕн Президиумĕ 1940 çулти июлĕн 10-мĕшĕнче кăларнă Указа пурнăçа кĕртессишĕн кĕрешмеççĕ. Чĕртавар мĕн чухлĕ расходланине пĕлмен руководительсем те сахал мар. Хатĕр продукци нумай вăхăт хушши экспедицинче выртать. Тăкаксем нумай, ĕçсене пĕтерессишĕн кĕрешмеççĕ.

Активра Чăваш АССР Суту-илŭ Халăх Комиссарĕ Никитин юлташ сăмах туса каларĕ. Вăл çăкăр пĕçерекен предприятисен пысăк пахалăхлă продукци туса кăларассишĕн кĕрешессине вăйлатма кирлине астутарчĕ.

— Çăнăх нумай расходлатпăр, анчах çăкăр планран сахалтарах писсе тухать. Припек планĕ тулман пирки, ĕçсыннисем валли тонни-тоннипе çемçе, кăпăш тата тутлă çăкăр параймастпăр, — тет Никитин юлташ.—Ку вăл пахалăхшăн кĕрешменнинне пĕлтерет. Хăшпĕр чухне припека пытарса халăх пурлăхне те вăрлама пултараççĕ. Çавăнпа та обществăллă харпăрлăха сыхласси пысăк задачăсенчен пĕри пулать. Пирĕн предприятисем пĕçерекен çăкăр ассортименчĕ пĕр пек, ăна пысăклатни кирлĕ.

Çăкăр пĕçерекен предприятисен склачĕсенче сахал мар механизмсем ахалех выртаççĕ. Анчах вĕсемпе усă курассишĕн, предприятисен вăй-хăватне пысăклатассишĕн, рабочисен ĕçне механизацилессишĕн тăрăшни сук.

Çăкăр пĕçерекен предприятисен продукцин ассортиментне пысăклатма пысăк майсем пур. Пирĕн республикĕра панулми сырла тата ытти сад пахчи çимĕçĕсем нумай. Çак паха çимĕçене çителĕклĕ хатĕрлес тĕлĕшпе трест начар ĕçлет. Вăл ăна пĕр-ик уйăхлăх валли кăна хатĕрлет. Трест предприятийĕсем квас тата ытти тутлă шывсем туса кăларма, сысна, чăхчĕп ĕрчетме пултараççĕ. Анчах пуçарулăх çукки пĕтĕм ĕçе чăрмантарса тăрать. План тăрăх 120 сысна, 500 чăх-чĕп ĕрчетмелле. Çак ĕçе тума тытăнманпа пĕрех.

Активра тухса калакансем гигиенăпа санитари правилисене пăхăнса ĕçлесси çине ытларах çавăрăнса пăхма кирлине асăрхаттарчĕç. Хальхи вăхăтра трест предприятийĕсенче пит те пысăк çитменлĕхсем пур. Тасалăхшăн, йĕркелĕхшăн кĕрешесси, санитарипе гигиена правилисене пăхăнса ĕçлесси кашни рабочипе работницăн пирвайхи тивĕçĕ пулса тăман-ха.

«Росглавхлеб» тресчĕн предприятийĕсенче стахановецсем сахал мар. Анчах кашни рабочине стахановла ĕçлеме вĕрентесси çине профсоюз организацийĕсем, предприяти руководителĕсем çитĕлĕклĕ çавăрăнса пăхмаççĕ.

— Кашни рабочипе работницăн сахалтан та техминимум кружокĕнчен вĕренсе тухмалла, — тет Никулин юлташ хăйĕн сăмахĕнче. — Анчах çак ĕç валли пĕтĕм трест тăрăх 123 тенкĕ уйăрса панă. Кулăшла япала мар-и ĕнтĕ ку?

Рабочисен, мастерсен квалификацине пĕрмаях ŭстерсе пыма ĕç укçи ыйтăвĕсене йĕркелеменни те нумай чăрмантарать. Çăкăр пĕçерекен промышленноçра ку тарăнченех обезличка тымарланса пурăнать. Ĕç укçине бригадăсем тăрăх тŭлеççĕ, рабочисен ĕçне уйрăман шута илмеççĕ. Мастер-и вăл, пысăк квалификациллĕ рабочи-и, е простой рабочи-и, вĕсен хушшинче уйрăмлăх çукпа пĕрех, вĕсем пурте пекех ĕç укçи пĕр пекрех илеççĕ.

Активра пĕтĕмпе 16 çын тухса каларĕç. Вĕсем «Росглавхлеб» тресчĕн тата предприятисен çитменлĕхĕсене хытă критиклерĕç. Актив 1941 çулти производствăллă программăна ăнăçлăн тултарса пыма конкретлă решени йышăнчĕ.

ПИЧЕТ КУННЕ УЯВЛАНИ

* * *

Шупашкар хулинчи пионерсен активĕ, шкулсенчи стена хаçачĕсен редакторĕсем Пичет кунне уявласа ирттерме Пионерсен центральнăй çуртне пухăнчĕç. Кунта ВКП(б) Обкомĕн инструкторĕ Жданкин юлташ Пичет кунĕ çинчен каласу туса ирттерчĕ. Каласу хыççăн ачасем хăйсен стена хаçачĕсене тишкерсе тухрĕç. Редколлеги членĕсем çитес вăхăтра кĕренŭ çулне пысăк пахалăхпа вĕçлессишĕн ытларах ĕçлеме пулчĕç.

Лекци

Паян, майăн 7-мĕшĕнче, ВКП(б) Шупашкар горкомĕн парткабинетĕнче ВКП(б) историйĕ çинчен вулакан лекцисен циклне итлекенсем валли **«Работа товарища Сталина «Диалектический и исторический материализм»** темăпа тŭлевлĕ лекци пулать (виççĕмĕш лекци). Лектор — **Германов** юлташ

Лекци каçхине 8 сехетре пуçланать.

ПАРТКАБИНЕТ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Осоавиахимăн XV-мĕш лотерейи билечĕсене вырнаçтарас ĕç

Осоавиахимăн XV-мĕш лотерей билечĕсене сарма пуçланă. Хуласемпе ялсенчен халăх лотерей билечĕсене çырăнас ĕçе питех те активлăн хутшăнни çинчен калакан нумай пĕлтерŭсем килеççĕ.

Майăн 4-мĕшĕнче каç пулнă тĕле Мускаври ĕççыннисем лотерей билечĕсене 4.100 пин тенкĕлĕх сырăннă.

* * *

КУКЕÇ. Районри предприятисенче, учрежденисенче тата колхозсенче Осоавиахимăн XV-мĕш лотерейĕ çинчен ăнлантарма тытăнчĕç. Рабочисемпе служащисем тата колхозниксем лотерей билечĕсене пухусенчех илеççĕ. Районĕпе паянхи куна 32 пин тенкĕлĕх сарнă. Госбанк отделенийĕнче ĕçлекенсем 315 тенкĕлĕх илнĕ. «14 лет Октября» колхозра 150 тенкĕлĕх сарнă.

П. НИКИТИН.

* * *

Чăвашдревпромсоюз, Тарпромсоюз конторисенче тата «Спартак» спорт обществинче ĕçлекен рабочисемпе служащисем Осоавиахимăн XV-мĕш лотерей билечĕсене пысăк хаваслăхпа илеççĕ. Малтанхи кун пурĕ 820 тенкĕлĕх сарнă. Зимин, Данилов, Нагоркин юлташсем билетсене 30-шар тенкĕлĕх илчĕç.

Н. ЯШКОВ.

* * *

ЭЛĔК. Йŭçкассинчи вăтам шкулта лотерей билечĕсене сарас ĕç анлăн сарăлса пырать. Майăн пуçламĕш кунĕсенче 1000 тенкĕлĕх сарнă.

* * *

СĔНТĔРВĂРРИ. Вăрман техникумĕнчи преподавательсемпе студентсем хушшинче Осоавиахимăн XV-мĕш лотерей билечĕсене сарма тытăнчĕç. Техникумра лотерей билечĕсене пурĕ 800 тенкĕлĕх сарнă.

В. ЗАХАРОВ.

Юрăсемпе ташăсен ансамблĕ районсене тухса каять

Чăвашсен юрăсемпе ташăсен ансамблĕ кăçал хăйĕн репертуарне чылай çĕнетрĕ. Çамрăк композиторсен К. Лебедев, А. Орлов, Васильев, Г. Воробьев юррисем ансамбль репертуарне илемлетеççĕ. Репертуарта вырăс композиторĕсен юррисем те сахал мар. Ансамбле кăçал çĕнĕ çынсем хутшăнчĕç.

Юрăсемпе ташăсен ансамблĕн художествăллă руководителĕ — çамрăк дирижер С. А. Казачков. Вăл Ленинградри консерваторинчен вĕренсе тухнă.

Ансамбль дирижерĕ — Чăваш АССР искусствăсен тава тивĕçлĕ деятелĕ В. П. Воробьев юлташ.

Ансамбль майăн 8-мĕшпе 9-мĕш кунĕсенче Шупашкар районĕнче пулать, унтан ытти районсене каять.

П. РЯБЧИКОВ.

„ГЛАВКИНОПРОКАТĂН“ ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИНЧИ КОНТОРИ

республикăри экрансем çине

„РАЗГРОМ ЮДЕНИЧА”

ятлă, саслă, художествăллă çĕнĕ фильм кăларать.

Сценарий авторĕсем—**В. Недоброво, Н. Брыкин.** Режиссер—**П. Петров-Бытов.** Оператор—**А. Назаров.**

Паллăрах рольсенче: РСФСР халăх артисчĕ Сталинла преми лауреачĕ **К. Скоробогатов,** РСФСР халăх артисчĕ **В. Гардин,** РСФСР тава тивĕçлĕ артисчĕ **В. Честноков,** артист **К. Чекаевский.**

Ленинградри Ленин орденлĕ „Ленфильм“ киностудийĕн производстви.

„ГЛАВКИНОПРОКАТĂН“ ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИНЧИ КОНТОРИ

республикăри экрансем çине

„ДЕВУШКА С ТОГО БЕРЕГА“

ятлă, художествăллă çĕнĕ фильм кăларать.

Çак фильм капитализм тискерлĕхĕнчен тарса килсе, Советсен çĕршывĕнче хăйĕн юратнă тăван çĕршывне тупнă хĕр çинчен каласа парать.

Сценарий авторĕсем: орденоносец **И. Мосашвили** тата **Л. Эсакиа.** Режиссер—**Л. Эсакиа.** 2-мĕш режиссер—**В. Швелидзе.** Оператор—орденоносец **А. Дигмелов.** Художник—**Р. Мирзашвили.** Композитор—**А. Мачавариани.**

ПАЛЛĂРАХ РОЛЬСЕНЧЕ: артистсем **Н. Чиковани, Э. Апакидзе, М. Джапаридзе.**

Тбилисири киностудийĕн производстви. „Главкинопрокат“ кăларнă.

ПРИНИМАЕТСЯ ПОДПИСКА

	НАЗВАНИЯ	Стоимость 1 месяц	3 месяца	6 месяцев
Газ.	„Чăваш Коммуни“	3—35	10—05	20—10
	„Çамрăк большевик“	1—70	5—10	10—20
	„Красная Чувашия“	3—35	10—05	20—10
	„Пионер сасси“	0—25	0—75	1—50
Журн.	„Ленин çулĕпе“	1—00	3—00	6—00
	„Сунтал“	1—00	3—00	6—00
	„Ĕçхĕрарăмĕ“	0—50	1—50	3—00
	„Илемлĕ литература“ (выходит по кварталь но)	—	3—00	6—00
	„Хатĕр пул“	0—30	0—90	1—80

Подписка принимается почтальонами, отделениями и агентствами связи, райорганизаторами Союзпечати, общественными распространителями печати. Заказы направлять по адресу: г. Чебоксары, Дом связи, отделу Союзпечати Управления связи.

СОЮЗПЕЧАТЬ.

КАЗАНСКИЙ ГОСУДАРСТВЕННЫЙ УНИВЕРСИТЕТ

имени В. И. Ульянова-Ленина

об'являет прием студентов на I-й курс следующих факультетов:

1. ГЕОЛОГО-ПОЧВЕННЫЙ: специальности—геология и почвоведение.
2. ГЕОГРАФИЧЕСКИЙ: специальности—география и гидрология.
3. ИСТОРИКО-ФИЛОЛОГИЧЕСКИЙ: специальности—история и литература.
4. ФИЗИКО-МАТЕМАТИЧЕСКИЙ: специальности—математика, физика, астрономия, механика и геофизика.
5. ХИМИЧЕСКИЙ: специальность—химия (органическая, неорганическая, аналитическая, физическая).

Срок обучения на всех факультетах 5 лет.

В Университет принимаются граждане Союза ССР в возрасте от 17 до 35 лет, имеющие законченное среднее образование.

Поступающие в Университет подвергаются приемным экзаменам по общим программам для поступающих в ВУЗ'ы, утвержденным Всесоюзным Комитетом по делам Высшей школы.

Приемные испытания будут производиться с 1 по 20 августа ПО СЛЕДУЮЩИМ ПРЕДМЕТАМ:

а) на биологический факультет и почвенное отделение геолого-почвенного факультета: по физике, химии, русскому языку и литературе;

б) на географический и историко-филологический факультет: по истории СССР, географии, русскому языку и литературе;

в) на геологическое отделение геолого-почвенного факультета: по математике, физике, химии, русскому языку и литературе;

г) на физико-математический и химический факультеты: по математике, физике, химии, русскому языку и литературе.

Кроме перечисленных дисциплин поступающие в Университет независимо от специальности должны сдать экзамен по одному из иностранных языков (английскому, французскому или немецкому).

Отлично окончившие среднюю школу в 1941 году освобождаются от сдачи приемных экзаменов.

Прием заявлений от желающих поступить в Университет будет производиться с 20 июня по 31 июля.

В заявлении должны быть указаны факультет и специальность, избранные поступающим.

Заявления подаются на имя ректора Университета с приложением:

а) автобиографии,

б) аттестата об окончании среднего учебного заведения (в подлиннике),

в) трех фотокарточек (снимок без головного убора) размер 3×4 см.

г) справки об отношении к воинской обязанности,

д) паспорт предъявляется лично по приезде.

На стипендию зачисляются принятые на 1 курс без испытаний (отличники средней школы), а также получившие на приемных экзаменах не менее двух третей оценок „отлично“, а остальные не ниже „хорошо“.

Общежитие и столовая при Университете имеются.

АДРЕС: Казань, ул. Чернышевского, 18 Го. Университет.

2—2

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Воладарского, 5. Дом Печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн—3—67, редактор заместителĕн—3—97, редакци секретарĕн — 4—40, пропаганда пайĕн — 4—97, парти пурнăç пайĕн — 7—97, экономика пайĕн — 0—88, сырусемпе рабселькорсен пайĕн—2—30, «Ĕçхĕрарăмĕ» журналăн—3—23, «Ленин çулĕпе» журналăн—0—85, издательство кассирĕн—0—23.

НТ 3359.

Гор. Чебоксары, типография № 1 Управления издательств и полиграфии при СНК ЧАССР Заказ № 260. Ф. б. 58Х84 л. л.